ЛАВРЕНТИЙ ТАЛАЁРОВ

# Сăпка юрри

С(чув)
Т16
22632-чув



# ПЫСĂК ТĔНЧЕРИ ПĔР ПĔЧĔК ЧУН

*Чăваш художникне*
*А. И. Миттова ялан*
*асра тытса*

## I

Анатолий Семенович Аннушкина эпĕ тахçантанпах пĕлетĕп. Пĕлессе пĕлетĕп те, анчах хире-хирĕç тăрса калаçман, çывăххăн паллашман. Пĕррехинче çапла, çурхи сулхăн каç, эпĕ уçăлма тесе урама тухнăччĕ, пилĕк хутлă çурт мансардин — художниксен мастерскойĕсен — сутă кантăкĕсем çине пăхкаласа пыраттăмччĕ. Унччен те пулмарĕ — çывăхрах йытă çурин шăнкăрав пек сасси илтĕнех кайрĕ. Эпĕ, утма чарăнса, хам умалла тинкертĕм: ман сукмак çинче, çич-сакăр утăмра, шап-шурă анчăк лăпчăна-лăпчăна вĕрсе тăрать. Çурт кĕтессинчен аллине кукăр авăрлă туя тытнă çӳллĕ арçын тухрĕ. Анчăк ун еннелле пăхса илчĕ те, хăюланса, ман çывăхах килчĕ, пасăрхинчен те хыттăнрах «ятлаçа» пуçларĕ.

— Шавлама та тытăнтăмăр пулать-и? — шӳтлĕн калаçса çывхарчĕ çӳллĕ арçын.— Аван мар, Бианка, аван мар. Çĕрле уçăлса çӳрекенсем аплах шавлакан марччĕ вĕсем.

Эпĕ ăна палласа илтĕм: вăл Аннушкин художник пулчĕ иккен — пейзаж ăсти. Пĕр искусствовед ун пирки: «Эскизсем тумасăр, тӳрех пир çине ӳкерекен, калама çук хăвăрт ĕçлекен талантлă живописец»,— тесе çырнине астăватăп эпĕ. Анатолий Семенович художниксем ушкăнпа йĕркелекен кашни выставкăнах хутшăнать, хăйне уйрăммăн та вĕсене час-часах ирттерет. Ку яхăнта хулара виçĕ выставка ĕçлет: художество галерейинче, пир-авăр тĕртекенсен Культура керменĕнче, çĕнĕ кинотеатрта. Виççĕшĕнче те Аннушкин картинисене самаях пысăк вырăн уйăрса панă.

Анатолий Семенович произведенийĕсене эпĕ хам мĕнлерех хаклани çинчен сăмах тапратас пулсан, эпĕ художество выставкисене чи малтанах унăн çĕнĕ ĕçĕсене курас ĕмĕтпе, курсан вара кăмăлăм тулас шанчăкпа кайни çинчен калăттăмччĕ. Ĕмĕтсем çитменни, шанчăкăм улталанни халиччен пулманччĕ-ха. Аннушкин пейзажĕсем

чун-чӗрене ытла та ҫывăх пулнăран художник мана юри эпӗ пӗлекен вырăнсене ҫеҫ ӳкернӗн, унтан та ытла, эпӗ уйрăмах килӗштерекен вырăнсене ҫеҫ ӳкернӗн туйăнать. Унăн картинисене пăхатăн та унти ҫынсен, йывăҫсен, чӗрчунсен, курăк-чечекӗн хусканăвӗсене куратăн ҫеҫ мар, сассисене те илтетӗн. Тырă хумханни, калинкке уҫăлни, ҫыран хӗрринче шыв шăмпăлтатни, вăрманта кайăксем юрлани, аслăк ҫинче чăхсем кăтиклени, арман ҫунаттисем вашлатса ҫаврăнни — ҫаксем йăлтах-йăлтах илтӗннӗн туйăнаҫҫӗ Анатолий Семенович пейзажӗсенче. Ку ҫеҫ те мар-ха, ҫав сасăсемпе пӗрле темле ҫепӗҫ, чуна тытса илекен ачаш кӗвӗ вӗҫӗмсӗр шăранса тăнă пек туйăнать. Эпӗ унăн кашни пейзажӗ пирки картина-симфони ку тесе каланă пулăттăм.

Аннушкин пӗлтӗр аллă ҫул тултарчӗ. Сарлака хулпуҫҫиллӗ, ҫӳллӗ те тапчам кӗлеткеллӗ, тулли пит-куҫлă хура ҫын вăл. Кăвакарма пуҫланă ҫӳҫне ҫурма кăшăл майлă кастарнă, янахне мăк пек ҫăра, кӗске сухал хупланă. Хӗлле эпӗ Аннушкина ялан тенӗ пекех хăлхаллă ҫăмламас ҫӗлӗкпе, хура кӗрӗкпе, ăшă ҫу кунӗсенче вара кӗске ҫанăллă йӗтӗн пир кӗпепе кураттăм. Хальхинче вăл ҫӳхе пальто тăхăннă, шарф ҫыхнă, пуҫӗнче — кăвак берет.

Эпӗ ăна сывлăх сунтăм. Вăл, иртсе пыраканскер, чарăнса тăчӗ те ман ҫине тинкеререх пăхрӗ.

— Палланă ҫынах пулчӗ тем?.. Чимӗр-ха, эсир Карпов журналист марччӗ-и? Ҫавă-ҫке, ара, ҫавă, чăнах. Сире те ырă каҫ сунатăп. Мӗн, кунталла пурăнмастăр пулӗ? Е ăҫта та пулин кайма тухрăр-и?

— Кунта пурăнатăп. Ҫул леш енче. Кăштах уҫăлса ҫӳрес килчӗ.

— Эппин, кӳршӗсем-ҫке эпир! — ман ҫывăхах пырса тăчӗ художник.— Акă пирӗн ҫурт.

— Эсир хулан тепӗр хӗрринче, хӗвеланăҫ енче, пурăнмастăрччӗ-и вара?

— Ҫапла, унта пурăнаттăм. Хваттере икӗ эрне каялла улăштартăм. Мастерской ҫывăхнерех килес килчӗ. Халь ак ҫуртран тухмасăрах унта хăпаратăп. Мастерскойӗ те ҫывăх, сад та аякра мар. Кăкшăма-мӗне кайнă чух асăрханă-и ҫӳллӗ ҫыранри дачăсене? Пирӗн коллективлă садри ҫуртсем вӗсем. Апла, уҫăлма тухрăр-ха, эппин? Ну, пӗр кичемрен ҫӳрер-и пӗрле?

Пирвайхи каҫ эпир манăн яланхи маршрутпа виҫӗ хут утса ҫаврăнтăмăр.

Урамра, фарисене чалкăштарса, çине-çинех машинăсем ирте-ирте каяççĕ. Çавăнпа та Аннушкин çуртсем хушшинчен тухсанах йытă çурине аллине илет те çул урлă каçса тепĕр квартала кĕрсен тин çĕре ярать. Анчăкĕ ун — питех те илĕртӳллĕ чĕрчун. Усăк хăлхаллă вăл, кĕске сăмсаллă, çăмĕ юр пек шурă, куçĕсемпе сăмси вĕçĕ çеç йĕпкĕн хура. Сăнĕ-пĕвĕнчен ытла тыткаларăшĕ илемлĕ, килĕшӳллĕ унăн. Пуçне тăратса, шĕвĕр вăрăм хӳринеункă пек çавăрса хурса, вăл, пирĕн умра шурă тĕк тĕрки кусса пынă пек, çемçен те çăмăллăн чупать. Питех те кăмăллă пулас хăйне хуçипе пĕрле çӳреме. Ана, çут тĕнчене нумай пулмасть килнĕскере, пурте илĕртет, пурте тĕлĕнтерет ахăр. Йывăç курать-и, мĕн-ха ку тенĕн, ăна сăмсипе тĕксе, шăршлакаласа пăхать; çил варкăшса иртет-и, мĕн сĕртĕнчĕ-ха мана тенĕн, сывлăш юхăмне хирĕç тăрать те, курăнман çиле шыраса, унталла-кунталла çаврăнкалать; уçă алăка асăрхать — пырса пăхать те шала кĕмест: тĕттĕм. Курăкран çакланса чăлханнă хут татăкĕ енне сике-сике ӳксе вĕрме тапратать. Вĕрĕн! Тарăхăн! Хускаласса хускалать хут татăкĕ, анчах чăштăр-чăштăр тунисĕр пуçне нимĕнле сасă та памасть. Ни хирĕç килмест, ни пăрахса каймасть. Анчăка тулаштарас мар тенĕн, çил çĕкленет те хут татăкне аяккалла вĕçтерсе каять. Тек вĕрмест вара йытă çури, тинех кăмăлĕ тулнăн пире хирĕç ывтăнса чупса килет. Аннушкин васкаса утать, вĕçĕмсĕр калаçать. Сылтăм аллинчи туйине вăл е пӳрнисем çинче вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăкаласа илет, е калаçнă хушăра ăна сăркăçпа (кистьпе) картина ӳкернĕ чухнехи пек вылятать, е хул айне хĕстерет, е çурăм хыçне тытать, е тата унпа тротуар хĕрринчи чул катăкĕсене шăк-шак тутарса хускатать. Сулахай алли — пальто кĕсйинче. Ăна вăл, икĕ аллăма та сулкаласа пырам мар-ха тенĕн, кĕсйинчен пачах та кăлармасть. Сасси хулăн та çемçе унăн — хушăран кăшт хăйăлтатарах тухакан кăмăллă сасă.

— Эпĕ ытлашши васкаса утмастăп-и? — тет те вăл мана хирĕç мĕн те пулин хуравласса кĕтмесĕрех малалла калаçса каять: — Писательсен пултарулăхĕ çинчен час-часах çыратăн, вĕсем пухусенче мĕнле-мĕнле ыйтусем сӳтсе явнине вулакансене хыпарласах тăратăн, композиторсене те манмастăн темелле, анчах пире ак, художниксене, кӳрентеретĕн, тăванăм. Çаплах калатăп: кӳрентеретĕн. Юлашки выставкăсенче иккĕшĕнче те курнăччĕ сана, анчах хаçатра шăл шурри те кăтартмарăн. Шухă-

шусем çук мар санăн. Илемлĕ литература произведенийĕсем çинчен çыракан çыннăн художниксен ĕçĕсене тишкерме те куç çивĕчлĕхĕпе тавçăрулăх çитмелле.

Эпĕ ăна итлесе пынă май пит пĕçере-пĕçере кайнине туятăп. Аннушкин хăйĕн шухăшĕсене пирвайхи тĕлпулурах çапла тӳррĕн каланинчен ытла мана çак пысăк художник, Мускавра та, тĕнчери выставкăсенче те кăтартнă нумай картина авторĕ, журналист мĕн çырни-çырманнине сăнасах пыни, çавăн валли те вăхăт тупни тĕлĕнтерет.

— Çавă та-ха, искусствовед мар-çке эпĕ. Ман шутпа, вĕсем сахалах пулăшмаççĕ хаçата,— тӳрре тухма пăхрăм эпĕ.— Выставкăсем çинчен каланă-каламан çырса параççĕ. Вĕсем — специалистсем. Тарăнрах кураççĕ, анлăрах шухăшлаççĕ, тĕрĕсрех хак параççĕ.

— Вăл çапла-а...—туйине çурăмĕ хыçне пытарчĕ Анатолий Семенович.— Анчах эсир те, хаçатçăсем, ку ĕçре ытлашши пулас çук. Мĕн çитмест пирĕн хăшпĕр искусствоведсене? Мĕн ытлашши вĕсен статйисенче? Туйăм çитмест. Искусство вăл — туйăм. Ун çинчен каласа парасса та пысăк туйăмпа, чунпа каласа пама пĕлмелле. Мĕн ытлашши? Пирĕн картинăсем çумне хăйсем шухăшласа кăларнине, вĕсенче пулма та пултарайманнине, кирлĕ те маррине çыпăçтарни, статьясене кирек хăш произведени пирки те калама пулакан, тĕрĕссипе, нихăш произведение хакланă чухне те кирлĕ мар трафарет чыхса тултарни. Акă мĕн.

— Пĕтертĕр эсир искусствоведсене,— кулатăп эпĕ.

— Пĕтерни мар ку. Вĕсене эпир кун пирки куçранах калатпăр. «Аслăн курăнма тăрăшса, ăнланмалла мар ан çырăр-ха, пирĕн ĕçре мĕн пур, мĕн çитмест — çавна кăтартса парăр, çавă кирлĕ пире»,— тетпĕр.

Каллех урама тухрăмăр та чарăнса тăрса Бианкăна кĕтрĕмĕр. Вăл çирĕм-вăтăр метрта пирĕн çине пăхса ларать. Анатолий Семенович ăна ятран та, шăхăрса та чĕнчĕ, анчах Бианка хускалмарĕ, пуçне çеç аяккалла пăрчĕ.

— Пĕлетĕн-и, мĕншĕн йăлăнтарать?—терĕ мана Аннушкин, кĕске сухаллă янахне ялт! çĕклесе илсе.— Пăрахса хăвартăмăр, каласмарăмăр унпа — çавăншăн кӳренчĕ те, апăрша çури. Йăлăнтарасси, кӳренесси, тарăхасси, савăнасси, хуйхăрасси — пурте пур унăн. Выртать-выртать те ха-аш! сывлать тепĕр чух, шухăшласа ывăннă пек. Хушшăн-хушшăн пӳлĕмре каллĕ-маллĕ утка-

ласа çӳретĕп те çапла — кускер ман çине куç айĕн тĕлĕнсе-е пăхать. «Мĕн куматăн-ха ĕнтĕ? Ларасчĕ»,— тет пек. Ват йытă пулсан, асăрхасах та каймăн-и, тен, вăл хăйĕн кăмăлне епле палăртнине. Пӳрнеске пек çеç-çке-ха ку! Мĕн пĕлес-тăвас пур унăн!

Анатолий Семенович кулса ячĕ те çĕре кукленчĕ, Бианкăна, пĕчĕк ачана илĕртнĕ пек, тутипе чӳ-ӳ! чӳ-ӳ! чăпăртаттарса чĕнчĕ. Йытă çури çав самантрах хăй ларакан вырăнтан сирпĕнчĕ. Малти урисене çӳлелле çĕклеçĕкле ывтăнса килчĕ вăл, хуçи умне çитерехпе авкаланма, хӳрине пĕтĕлтеттерсе вылятма тытăнчĕ, çапла чупнă çĕртех Аннушкин ытамне кĕрсе ӳкрĕ. Вăл ыткăнса килнĕ вăхăтра Анатолий Семенович ăна хавхалантаракан ачаш сасăпа илĕртсе тăчĕ: «Вăт-вăт! Çапла! Маттур, пĕчĕкскерĕм! Питĕ маттур!» — тее-тее ала çупрĕ.

Унтан вăл анчăка пальто ăшне чикрĕ те унпа пĕчĕк ачапа сăмахланă пек калаçса пычĕ: «Шăнмарăн-и, чĕтретĕн пек-çке? Е ку хĕвре ларнăшăн савăннине пĕлтерет-и? Киле кĕретпĕр те, акă, ăшă сĕт ĕçтерĕп сана. Пĕчĕккисем пурте сĕт юратаççĕ, сĕт юратнăран хăвăрт çитĕнеççĕ».

— Пысăк йытах пулать-и вăл? — ыйтатăп эпĕ.

— Çук, пулмасть,— хуравлать Аннушкин.— Амăшĕ пĕчĕкскерччĕ.

Бианка, канăççăррăн йăшаланса илсе, каллех кĕмĕл шăнкăрав пек уçă сассипе вĕрсе ячĕ.

— Ак тата! Хĕвре ларнă чухне те вĕрмелле-и?—йытă çури пăхнă еннелле, таçта çӳлелле тинкерчĕ Аннушкин.— Мĕн куртăн-ха унта? Ах, уйăх-çке! Уйăх пур çав унта, уйăх пĕлĕт хушшипе шăвать! Çапла, Бианка, тем те пур çут тĕнчере. Тем те курăн-ха эсĕ, тĕлĕнмелли пайтах пулĕ.

Иккĕмĕш эрне ĕнтĕ каçсерен пĕрле çӳретпĕр эпир: Анатолий Семенович, Бианка, эпĕ. Пĕр-пĕрне тĕл пулас тесе, эпир çапла килĕшнĕ: калаçса таталнă вăхăтра манăн хамăрăн яланхи маршрутпа хĕвеле май утмалла, Анатолий Семеновичпа Бианкăн — хĕвеле хирĕç. Хамăр çуртран тухса нумай та каймастăп — Бианка мĕкĕлтетсе чупнине куратăп. Ĕнтĕ эпĕ те халĕ çывăх тус пулса тăтăм уншăн — асăрхасанах мана хирĕç вĕçтерсе килет, ура вĕçĕнче явкаланса ачашланать, чĕвен тăрса, ташланă чухнехи пек сиккелет, кĕлеткине авкалать, пуçне пăркалать, куçран кĕрсе каяс пек пăхать. Çакă йăлтах вăл тĕл пулнăшăн хĕпĕртесе кайнине, маншăн та тунсăхланине, пĕрле пулас, пĕрле çӳрес килнине пĕлтерет. Қалĕччĕ мĕн

те пулсан: «Çӳрĕпĕр ĕнтĕ пĕрле. Кунĕпе пӳртре пăчăхса ларнă-çке эпĕ!» — тейĕччĕ, анчах — чĕлхи çук. Вăл чылаях пысăкланчĕ ĕнтĕ. Хăй ӳснинчен ытла кӳлепи вăрăмланчĕ. Хăлхисем çĕкленчĕç. Çапах та кушакран нумай пысăках мар çак пĕчĕк те ытарайми чĕрчун.

Талăк хушшинче Анатолий Семеновичăн Бианка пирки каласа кăтартмалли самаях пуçтарăнать.

— Паян ятласа илтĕм-ха ăна, хытах ятларăм,— тет вăл.

— Ма тата?

— Иртен-пĕр машина хыçĕнчен вĕрсе чупнăшăн. Вĕсем ытла та тĕлĕнтереççĕ, тарăхтараççĕ пулас ăна. «Ман хуçа, ав, ним васкамасăр утса пырать, сирĕн ма çаплах кĕрлесе-хыпаланса çӳремелле?» — тет-ши ĕнтĕ... Çук, капла юрамасть, мăй çыххи туянса, алă вĕççĕн çавăтса çӳреме тивет. Ара, пĕр машина хыççăн янăрашса чупĕ-чупĕ те, тепри, хыçалтан пыраканни, таптаса кайĕ...

Бианка хӳрине хускаткаласа пирĕн умра ларать, пуçне пăркалать, хуçи çине айăплăн пăха-пăха илет.

— Кур-халĕ ăна,— тет Аннушкин шăппăн.— Йăлтах ăнланать тейĕн! Епле итлет! Сасса кăшт хăпартса калаç кăна—сисет, çиййĕнчех сисет! Ача пекех, чисти ача! Вăрçнă чух пуçне чиксе итлет, анчах... хăйĕннех тăвать. Хамăн вара — çавăншăн та юратас килет. Ача пек айван та, шухă та, илĕртӳллĕ те пулнăшăн. Епле кăкарса хурам-ха ăна хам çума? Хăйне уçăлма илсе тухасса кĕтсе çеç тăрать пулсассăн, епле мăйкăчлас килтĕр ĕнтĕ ăна?!

Йытăпа йăпанса, ĕç-пуç çинчен сăмахласа, тепĕр чухне эпир виçĕ сехет таранах уткаласа çӳретпĕр. Пирĕн халь, Анатолий Семеновичпа иксĕмĕрĕн, пĕр-пĕрин ăснекăмăлне пĕлес тенĕ пек, асăрханарах калаçасси çук ĕнтĕ. Малтанхи каççенчех хамăра хамăр ютшăнса тытма пăрахрăмăр, туслашса кайрăмăр та—тепĕр чухне пуçа мĕн пырса кĕнĕ, çавна пакăлтататпăр, сăмах çукран сăмах тупса тем те пуплетпĕр. Хушăран тата пĕр-пĕрне йĕплесе илесси те пулкалать. Икĕ ача иккен Анатолий Семеновичăн: ывăлпа хĕр. Ывăлĕ университетра вĕренет, хĕрачи— вăтам шкулта.

Аннушкинăн çакăн пек йăла та пур: тем асăрхаса е тем аса илсе, «чим-ха!» темелле те ун хăй пуçланă калаçăва вĕçне çитермесĕрех е çынна итлесе пĕтермесĕрех урăххи пирки сăмах пуçламалла. «Чим-ха! Çанталăк лăпкă тăнă чухне çак çӳçе çулçисем сип-симĕс, çил тухсан— тĕссĕртерех. Тавçăртăн-и мĕншĕнне? Мĕншĕн тесен вăй-

лăрах çил вăхăтĕнче вĕсен тӳрт енĕсем тăлпаланса вĕлтĕртетеççĕ. Тирек çулçи те çавах, курнă пулĕ? Çулçăсен тӳрт енĕ шупкарах... Эпĕ ӳкернĕ картинăсенче вара кирек хăш çанталăкра та пĕр тĕслĕ. Ак сана ме! Халиччен мĕнле асăрхаман-ха эпĕ çавна?» Е тата: «Чим-ха, эсир мĕншĕн хаçатра «çанталăк çине шанса», «юлташ çине шанса», тесе çыратăр? Ун пек калаçмасть-çке чăваш. «Сана шанса», «хама хам шанса», тесе калатпăр. Радиопа та çавах: «Мĕн çинчен çыраççĕ-ха паянхи хаçатсем?» — теççĕ. «Мĕн çыраççĕ-ха паянхи хаçатсем?» — тесен, ман шутпа, кĕскерех те, илемлĕрех те пек...»

Хальхинче Анатолий Семенович сулахай аллине ман хулпуççи çине хучĕ те туйипе телебашня еннелле кăтартрĕ.

— Чим-ха, пăх, ав, çавăнта,— терĕ вăл.— Куратăн-и, телебашня мĕнле ĕçлет?

— Тĕтре пулсан та, кăштах куратăп...

— Çук, телебашнине хăйне мар, вăл мĕнле ĕçленине, мĕн тунине кур эсĕ! — туйипе сывлăшалла тĕксе, ман хула хăй çумне пăчăртать Аннушкин.— Эсĕ телебашня çине çеç мар, ытти япаласем çине те сăнасарах пăх. Тĕтре хумĕсем çине, çуртсем çине. Башня, ав, пĕлĕтсенчен те çӳле кармашнă, вăл унта тĕнчене курать, илтет, хăй курни-илтнине пире пĕлтерет. Куратăн пуль, ун çумĕнчен пур еннелле те тĕтре хумĕсем чупа-чупа каяççĕ? Маншăн пулсан, вĕсем — телехумсем. Эх, алăра сăркăç, умра мольбертпа пир тăрăхĕ пуласчĕ халь, э? Юрĕ, килте аса илме тăрăшăп. Халь куç умне тухса тăнă сăнарпа ӳкерес хавхалану сӳрĕлмесен... Саманта, кĕске саманта çийĕнчех тытса юлни кирлĕ-çке-ха творчествăра,—куляннă чухнехи пек вăрăммăн хашлатса илет Анатолий Семенович.

Вăл пуçне «шел, ним тума та çук» тенĕн пăркалать те, çĕрелле пăхса, пĕр хушă чĕнмесĕр утса пырать.

Анчах кун пирки сăмахĕ пĕтмен иккен-ха унăн.

— Гете икĕ тĕрлĕ творчество пурри çинчен каланă— каллех хĕрӳленет вăл.—Пĕри — тăвас япала автор куçне пĕтĕмпех, вак-тĕвек таранччен, курăнни, урăхларах каласан, хăвăрт, çийĕнчех пулаканни. Тепри — ĕçленĕ май асапланса ширани, произведени тертпе-хĕнпе çурални.

— Каçар та, эсĕ хăвна хăш творчество çынни тесе шутлатăн? — ыйтатăп, вăл мĕн каласса сисетĕп пулин те.

— Маншăн пулсан, хăвăрт, çăмăллăн ĕçлени çеç

творчество. Маншăн пулсан, творчество вăл—уяв. Савăнăçсăр, асаппа ĕçлени — вăхăтна та, вăйна та ним перекетлемесĕр пĕтерни çеç. Киленсе тунă япала çине пăхма та савăк: унта — ăс çивĕчлĕхĕ, кăмăла ăшăтакан кулă, янăраса тăракан кĕвĕ.

— Лермонтов «На смерть поэта» сăввăн юлашки пайне ним хуратмасăр, пĕр улăштармасăр çырнă, «У врат обители...» тата ытти чылай сăвви-поэми те çапла çуралнă унăн. Гоголь, ав, пачах урăхла: вăл хăйĕн произведенийĕсене темиçе хутчен çĕнĕрен çырса, темиçе хутчен тӳрлетсе асапланнă. Эппин, хăвăрт тунă ĕç кăна киленӳ, ăнăçу кӳрет теме çук пулĕ,— тетĕп эпĕ, унпа килĕшсех пĕтерейместĕр.— Асапланса шыранинче те хăйне майлă киленӳ пур-тăр.

Аннушкин, шухăша кайса, пĕр хушă чĕнмесĕр утать.

— Амсанатăп,— ассăн сывласа ярать вăл.

— Кама?

— Пултарулăхри асапсене çĕнтерме чăтăм çитерекенсене... Çаплах пуль çав, художникăн сăркăç е ручка çăмăллăн вылянна чухне çеç мар, пултарулăх терчĕсене çĕнтерсе те ĕçлеме пĕлмелле пуль. Шухăш-кăмăл çĕкленес вăхăта кĕтмелле мар, ăна кирек хăçан та çĕклеме тӳçĕм çитермелле... Кам каланăччĕ-ха çакна?

— Сан алăри сăркăç яланах çĕкленӳллĕ вылять пулас-ха, пĕлетĕн пулас хăвна ху хăпартлантарма. Тухăçлă ĕçлетĕн эсĕ,— тетĕп эпĕ, Аннушкин хăйне тиркесерех калаçа пуçласан.

— Халиччен çаплаччĕ те...

Эпĕ унран ку яхăнта мĕн ӳкерни çинчен ыйтрăм. Вăл кĕскен каласа пачĕ те хушса хучĕ:

— Сентябрьте Кĕрхи выставка уçăлмалла. Çĕнĕ картинăсене çавăнта кăтартасшăн-ха. Çулленех Çурхи выставка йĕркелетпĕр пулсан, кăçалтан Кĕрхи те йăлана кĕтĕр тесе йышăнтăмăр.

Пĕр каçхине Анатолий Семенович хăй мĕнле майпа йытă хуçи пулса тăни, Бианкăна епле тупни çинчен каласа кăтартрĕ.

— Пĕлессӳ килсен,— кулса илчĕ вăл,— эпĕ халиччен нихçан та йытă-кушака килĕштерсе кайман, ăшă куçпа пăхман. Сакăр ачаччĕ пирĕн çемьере, вунпĕрĕн пурăнаттăмăр. Çăкăр-тăвар хакне мĕн пĕчĕкренех лайăх пĕлнĕ эпир. Йытă-кушак усрани вара пирĕншĕн ахаль те çиме çитмен татăка татах пайлани пулĕччĕ. Йытă-качка мана туяпа хăваламалли, чулпа пемелли юрăхсăр чĕрчун пек

çеç туйăннă. Бианкăна киле илсе пыриччен, эпĕ хăшпĕр çынсем хваттерсенче мĕншĕн йытă усранине ăнланман, ăнланма та тăрăшман. Урайĕнче — кавирсем, йĕри-тавра хаклă сĕтел-пукан — мĕн тесе йытă усрамалла-ха çавăн пек хваттерте? Мĕне кирлĕ вăл? Ĕçсĕр аптăранăран-и? Акă мĕнле шухăшланă эпĕ. Халĕ вара... Халĕ мана Бианкăсăр нихçан та пурăнман пек, унсăр çемье пурнăçĕ тулли пулас та çук пек туйăнать. Ну, итле, эппин, каласа парас сана Бианка пирĕн килйыша епле майпа килсе хушăнни çинчен...

Ун калавне эпĕ, Анатолий Семенович Бианкăна мĕнле тупнине, хаклă вулаканăм, хам куçпа хам курнă пекех çырса кăтартатăп.

...Умра — Атăл çыранĕ, икĕ енче — икĕ типĕ çырма. Виçĕ çыран хĕррипе, нефтебаза тавра, коллективлă сад çурмаункăн çаврăнать. Юлашки хут Анатолий Семенович кунта уйăх каялла, асар-писер çил-тăман вăхăтĕнче, килсе кайнăччĕ. Хальхинче ак пырса кĕчĕ те вăл сада дачăсем хыçĕнче çеç юр саплăкăн-саплăкăн шуралса выртнине курчĕ. Кун умне кушăхма ĕлкĕреймен йăлтăрккa хура çĕр тухса выртрĕ, кăкăра кăчкă шăршиллĕ чĕрĕ сывлăш тулчĕ. Йывăç вуллисемпе кантăксем çинче тачка çĕр сăхса илме ĕлкĕреймен шыв кӳлленчĕкĕсен çути вылять, хĕвел ăшшинче хускалмасăр ларакан улмуççисемпе çырла тĕмĕсем хушшинчен палăри-палăрми пăс çĕкленет.

Утса пыратчĕ Анатолий Семенович вĕтĕ чул сарнă çулпа — ун умне сик тух сулахайри çырма енчен пĕчĕкçĕ шурă йытă. Вăл Аннушкин çине пăхса илчĕ те пĕр шикленмесĕр тăват-пилĕк утăм маларах лĕпĕстетсе чупрĕ. Йыттине куна Аннушкин пĕлтĕр çулла яланах куратчĕ-ха. Кунта, нефтебаза леш енчи пĕр пахчара, ӳсрĕ вăл. Хуçи ăна — пурăнайсан пурăнтăр, тем кирлĕ чĕрчунах мар тесе шутларĕ курăнать — хĕл ларсан та килне илсе каймарĕ. Тепĕр чухне çав йытă Анатолий Семенович пахчине те пыркаласа кĕретчĕ, хурлăхан тĕмĕ айĕнчи карçинккана тӳнтерсе яратчĕ те, унти çӳп-çапа чаштăртаттарса, çимелли шыратчĕ. Аннушкин ăна çăкăр татăкĕ пăрахса паратчĕ, лешĕ хырăмĕ тем пек выçнă пулсан та васкамасăр чăмлама тытăнатчĕ е, çавăн пекех васкамасăр, улахрах вырăна йăтса тухса каятчĕ.

Аннушкин хӳме кĕтессинчен сылтăмалла пăрăнчĕ, тепĕртак утсан, Атăл хĕрринех тухрĕ те каллех сылтăмалла пăрăнчĕ. Йытă çав-çавах ун умĕнче чупса пы-

рать-ха. Ак тамаша! Вăл Аннушкинсен пахчинех кĕрсе кайрĕ те тӳрех веранда айнелле чăмрĕ.

Пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç туса, Анатолий Семенович йытă пирки шутлама та пăрахнăччĕ ĕнтĕ. Унтан ним ăнсăртран веранда айнелле пăхса илчĕ те тăватă хура куç йăлтăртатнине курах кайрĕ: веранда айĕнче амăшĕпе çури куçĕсене çутатса выртаççĕ.

— Чимĕр-ха,— вĕсен çывăхнерех утса пычĕ Анатолий Семенович.— Мĕне пĕлтерет ку? Кам ирĕк панипе хуçаланатăр ман пахчара? — хăй çинелле хăрамасăр, шанса пăхакан чĕрчунсемпе кулкаласа калаçрĕ вăл.— Ку пӳрнеске пек шурккана эсĕ, амăшĕ, ман пахчара çăвăрларăн-и е йăтса килтĕн? Тата çук-и-ха унта вĕсем?

Вăл, чĕркуçлесе, веранда айнелле лайăхрах тинкерчĕ — йытă çурисем урăх курăнмарĕç.

— Хуçу сан çине ăшă куçпах пăхмасть те, ман кăмăлăма шантăн пулать-и? — йытă амине шĕвĕр пӳрнипе юнаса илчĕ Анатолий Семенович ура çине çĕкленнĕ май.— Кăлăхах, эпĕ те йытă-кушакпа туслах мар çав. Акă тытам та çуруна уттарам хуçу пахчине. Эсĕ те вара, хыçран лĕпĕстетсе пырăн. Часах ак хĕрачапа амăшĕ килеççĕ. Хĕрĕм курĕ те сан шурккуна, ытараймасăр киле илсе каясшăн пулĕ. Çук-ха, йытăпа пĕрлех пурăнас марччĕ.

Кăштахран Анатолий Семенович чăнах та анчăка йăтрĕ те, амăшне ертсе, пахчаран тухрĕ, тепĕр виçĕ минутран çитес çĕре çитрĕ те.

Йытă хуçин сачĕ çыран тайлăмĕнче. Юхăнтарса янă пысăк пахча вăл, тарăн çырма тĕпнелле анса каякан-скер. Пĕлтĕрхи çӳллĕ ӳснĕ типĕ çумкурăк хушшинче хурлăхан тĕмĕсем темле мĕскĕннĕн курăнса лараççĕ, армак-чармак туратлă улмуççисемпе чиесене çын алли пырса тĕкĕнмен темелле, пахчана талккăшпех шăрт пек хунав пусса илнĕ. Кӳршĕсем çак çыран тайлăмĕнчех куçа савăнтаракан садсем чĕртнĕ. Ку çын вара çĕре лайăххăн катмакласа та тикĕслемен. Мĕн тăвăн-ха, кăмăлĕ çукрах пулас сад ĕçĕпе йăпанма.

Калинккерен инçех те мар, пахча çумĕпе иртекен шырлан хĕрринче, саваламан хăмасенчен çапкаласа тунă пĕчĕк сарай пур. Унпа юнашар, дача лартас ĕмĕтпе-ши, кирпĕч купаласа хунă, унтах тимĕр кăшăллă кивĕ катка йăвантарнă. Çакă пулĕ-ха йытă йăви тесе, Аннушкин катка ăшне ӳпĕнсе пăхрĕ те унта кĕççеленсе кайнă йĕпе çĕтĕк татăкне курчĕ. Кăшт анатарарах вĕçен кайăксене

хăратмалли катемпи чалăшса тăнине асăрхарĕ. Ун патне анчĕ те те «кĕпине» хывса илчĕ, каялла хăпарса, каткари çĕтĕке туртса кăларчĕ. Кӳ-ӳ! çĕкленчĕ йĕпе çĕтĕк-çатăкпа пĕрле краççын шăрши. Вара тин Анатолий Семенович хăй çак шăрша кунта килсенех туйнине тавçăрса илчĕ. Малтан вăл катка хыçнелле, унтан сăрталла тинкерсе пăхрĕ. Нефтебаза хӳми айĕнчен краççын-мазутпа юр шывĕн симĕс кăвак хутăшĕ юхса анать. Катка хыçне çитсен, çав таса мар шыв пĕчĕк кӳлленчĕкре пĕтĕрĕнет-çаврăнать те шырланалла сикет.

— Авă иккен, мĕншĕн пăрахса кайнă эсĕ кунтан,— хăй тавра кускалакан йытăпа калаçса илчĕ Аннушкин.— Çапла пуль ça-ав, выртасах килмест пуль ĕнтĕ йĕпе çĕрте, юратас килмест пуль ку шăрша...

Вăл каткана сарайран анатарах йăвантарса куçарчĕ, ăшне курăкпа шăлса типĕтрĕ, унтан катемпи çинчен сӳсе илнĕ кĕпене катка ăшне тирпейлĕн сарчĕ те анчăка унта янă хыççăн, амăшĕн те йăвана кĕрсе выртасса кĕтсе илсе, пахчаран тухрĕ.

Тепринче Аннушкин сада виçĕ кун иртсен кайрĕ. Кунхинче те çанталăк хĕвеллĕччĕ, тӳлекчĕ. Анчах таçтан сасартăк çил çĕкленчĕ, çумăр чашлаттарса ячĕ. Дачăна хăвăртрах çитсе ӳкес тесе, Анатолий Семенович сада халиччен хи пек хапхаран мар, сылтăмри çырма хĕррипе кĕчĕ (кунтан çул тӳртенрех). Вăл çӳллĕ хӳме çумĕнче лапрана çăрса утнă чухне кĕтмен çĕртен çырмара хайхи шурă йытă вилли выртнине асăрхарĕ: «Пĕтрĕ иккен мĕскĕнĕн пурнăçĕ,— пĕр хушă ун çине шеллесе пăхса тăчĕ Аннушкин.— Мĕн пулчĕ-ши сана? Чиперех çӳреттĕнччĕ-иç...» Унтан Анатолий Семенович виçĕ кун каялла шăпах çак енче пăшал сасси илтĕнсе кайнине аса илчĕ. Виçĕ кун каялла, Аннушкин йытă амипе çурине çак пахчана килсе янă хыççăн ик-виç сехет иртсен... Мĕнле ирсĕрĕн алли çĕкленчĕ-ши çав ним айăпсăр чĕрчун çине? Кама кансĕрлерĕ-ши вăл?..

Çапла шухăшласа, вăл йытă хуçин пахчи тĕлне çитрĕ. Унта тăвайккинчен çумăр шывĕ кĕрлесе анать. Ун шавĕнче Анатолий Семеновича анчăк йынăшни илтĕннĕн туйăнса кайрĕ. Художник аялалла пăхрĕ те сарай кĕтессинчи кирпĕч купи çинче чăнахах та йытă çури ларнине курчĕ. Ун хыçĕнче те, умĕнче те шыв шарласа выртать. Каткана вăл пахча вĕçнелле юхтарса кайнă та, катки карта çумĕнче, шарлак çинче, сиккелет.

Йытă çури вăйлă юхакан пылчăклă шыв тыткăнĕнчен

ҫӑлӑнасшӑн пахча хӗрринчи ҫерем еннелле пӑхать, анчах хӑй шарлак урлӑ сиксе те, ишсе те каҫма вӑй ҫитерес ҫуккине туйса, мӗскӗннӗн, такамран пулӑшу кӗтнӗн йынӑша-йынӑша илет.

Сасартӑк ун айӗнчи кирпӗч вырӑнтан хускалчӗ те, анчӑк шыва ӳкрӗ, кутӑн-пуҫӑн пӗтӗрӗнсе, ҫырма тӗпнелле юхса кайрӗ. Ҫарт! туртӑнчӗ Аннушкин, пахча алӑкне шӑтӑр-шатӑр уҫса пӑрахрӗ, ӳкес мар тесе, шакӑлчаран, карта юписенчен, йывӑҫ тураттисенчен яра-яра тытса, ҫырманалла чупса анчӗ.

Ҫаялла улӑхсан, вӑл хӑйсен садне кӗмесӗрех васкаса хулана таврӑнчӗ.

Анатолий Семенович самантлӑха шӑпланчӗ те йӑвашшӑн кулчӗ, ассӑн сывласа илчӗ.

— Ҫапла вара киле йытӑ ҫурипе пырса кӗтӗм,—терӗ вӑл малалла.— Бианка ятлӑ хутӑмӑр йытӑ ҫурине. Пире вӑл пурсӑмӑра та тӳрех иленчӗ. Пӗчӗкскер хамӑра шанса, парӑнса ҫывӑхланнӑран эпир те ӑна юратса пӑрахрӑмӑр. Ир те, каҫ та халь сӑмах ун пирки ҫеҫ, куҫ ун ҫинче ҫеҫ. Хӑшӗ килсе кӗрет — тӳрех: «Бианка, ӑҫта эсӗ?» Чупса пырать те вара ҫак апӑрша алӑк патне, кӗнӗ ҫынна ыталаса илес пек, ик ура ҫине чӗвенет, хуллен йынӑша- йынӑша ачашланать.

— Эх, ҫын чунӗн ӑшши... Пурин валли те кирлӗ-ҫке вӑл,— тетӗп эпӗ, Аннушкина итлесе хытах пӑлханса ӳкнӗскер.

— Пире хамӑра, ҫынсене, кирлӗ мар-и тата чӗрчун ҫапла парӑнса юратни! — пӑлханчӑк сасӑпа каларӗ Анатолий Семенович.— Санран хӳтлӗх кӗтекен, сана шанакан, ҫакӑншӑн пуриншӗн те виҫесӗр юратупа тавӑракан чӗрчун юнашар пулни мӗн тери кирлӗ этеме! Пӗлсенччӗ эсӗ: йытӑ ҫури илсе пынӑранпа хваттерте ним тирпеййӗрке те юлмарӗ. Ҫавирсене чӗрмелет, диванпа креслӑсем ҫинчи виткӗчсене, сӗтел ҫиттисене сӗтӗре-сӗтӗре антарать. Лартнӑ вырӑнта тупаймастӑн атӑ-пушмака, кӗпе-йӗме те унчченхи пек ал айне хураймастӑн. Кухньӑра шӑмӑ пӑрахса патӑн ӑна,— ҫук-ҫке, унта мар, залра е ытти пӳлӗмсенче, ҫын куҫӗ умӗнче, кӑтӑртаттарса вырт-малла. Ҫапах та пурте килӗшет ку пире. Бианка кирек мӗн тусан та, хуть мӗн хӑтлансан та, савӑнатпӑр ҫеҫ. Сӗтел-пукан урисемпе кӗтессисене кӑшласа пӗтерчӗ — куншӑн ятлаҫсан та, кулмасӑр ятлаҫаймастпӑр. Ара, Бианкӑн ҫӗнӗ шӑлӗсем тухаҫҫӗ-ҫке, ҫавӑнпа мӗн курнӑ, ӑна кӑшлама пӑхать, пӗчӗкскер!..

## II

Кӗркунне ҫитрӗ. Ҫур уйӑха яхӑн татти-сыпписӗр ҫумӑр лӳшкетрӗ. Ҫав хушӑра хам тусӑмсене — Анатолий Семеновичпа Бианкӑна пӗрре те курасси пулмарӗ. Ҫумӑр чарӑнарахпа хаҫат ӗҫӗпе района тухса кайма тиврӗ те, эрне ытла унта ирттертӗм. Таврӑнтӑм кӑна — редакцири юлташсенчен художество галерейинче выставка уҫӑлни ҫинчен пӗлтӗм. Ӗҫ кунӗ пӗтсе пыратчӗ ӗнтӗ, ывӑнасса та хытах ывӑннӑччӗ, ҫапах та выставкӑна кайса курассине ырана хӑварма чӑтӑм ҫитерейменрӗм — художество галерейине тухса чупрӑм.

Вестибюле кӗтӗм те хывӑнма тытӑнтӑм. Манран виҫтӑват утӑмра, ҫӳлти хута хӑпармалли пусма картлашки ҫинче, иккӗн — ҫамрӑк мар арҫынпа йӗкӗт — калаҫса тӑраҫҫӗ.

— Выставка пуян,— тет ҫамрӑкки.— Нумай автора ырӑн панӑ, жанрсем тӗрлӗрен. Темиҫе тӗрлӗ стиль, тӗнче ҫине тӗрлӗ куҫпа пӑхни. Аннушкин картинисем ҫукки ҫеҫ кӑмӑла хӑварчӗ.

— Эпӗ та ҫавнах каласшӑнччӗ,— куҫлӑхне тӳрлетсе, пуҫне сулса илчӗ ватӑраххи.— Чирлемен-ши вӑл? Выставкӑра чылай художника куртӑм, вӑл, ав, хӑй те пулин килмен. Тӗлӗнмелле: ҫавӑн пысӑкӑш выставка Аннушкин картинисемсӗр...

Апла иккен-ха. Инҫе ҫултан ывӑнса таврӑннине пӑхмасӑр кунта васкаса килтӗм, анчах ҫак сӑмахсене илтрӗм те — выставка курас кӑмӑлӑм сасартӑк сӗвӗрӗлчӗ.

Ҫапах та хӑпарса кайрӑм-ха ҫӳлти хута. Унӑн-кунӑн пӑхкаласа, пӗр залран теприне кӗре-кӗре тухатӑп, Аннушкин картинисене шыратӑп. Аялта илтнӗ сӑмахсене ӗненменшӗн те мар, вӗсене ытахальтен каламан пирки иккӗленместӗп, анчах... анчах та ӑшра ҫав-ҫавах темле шанчӑк хӗлхемӗ пур. Ҫавӑнпа утса ҫӳретӗп те залсем тӑрӑх. Анатолий Семенович хӑй чӗлхипе каланӑччӗ-ҫке-ха, ҫӗнӗ выставкӑра кӑтартма виҫӗ картина ҫырса пӗтертӗм, тенӗччӗ. Нивушлӗ вара пӗрне те тӑратман?.. Унӑн картинисем чӑнахах та выставкӑра ҫук пулсан, тем каласан та инкек сиксе тухнӑ ун. Чирлесе ӳкмен-ши? Ӗнтӗ эпӗ халь Анатолий Семеновичӑн ҫӗнӗ пейзажӗсене курас килнинчен ытла ҫак шухӑшсене («инкек тавраш сиксе тухман-ши, чирлемен-ши?») хӑвӑртрах сирсе ярасшӑн залран зала васкарӑм. Аннушкинӑн пӗр картинине курсанах ӑшчик лӑпланӗччӗ...

Кăмăл хуçăлнăскер, тепĕр çирĕм-çирĕм пилĕк минутран художество галерейинчен тухрăм та Аннушкин патне çул тытрăм. Мана Анатолий Семенович ывăлĕ уçса кĕртрĕ. Художник тăрăхла пӳлĕм варринче, кавир витнĕ диван çинче, журнал вуласа ларать. Умĕнче электрокамин çунать, виç кĕтеслĕ сĕтел хĕрринче авăрлă тăм куркара кофе пăсланать. Сĕтел çинче те, йĕри-тавра арăш-пирĕш ларакан пукансем çинче те, диван çинче те, урайĕнче те «Искусство» журналăн тĕрлĕ çулсенче тухнă номерĕсемпе живопись çинчен çырнă кĕнекесем сапаланса выртаççĕ. Кĕтесри телевизор экранĕ çинче темле мĕлке йăлт! йăлт! сикет. Ахăртнех, концерт кăтартаççĕ: çак пĕр хавассăр шăплăхра хĕрарăм кула-кула юрлани илĕшӳсĕр илтĕнсе тăрать. Эпĕ Аннушкин çинелле сăнасарах пăхрăм: итлетех-ши вара? Çук, юрă ун хăлхине кĕнĕн туйăнмасть. Телевизор ĕçлесе ларнине паçăрах манса кайнă пулас вăл. Алă пачĕ те, диван çинчи кĕнекесене пĕр çĕререх шутарса, ман валли вырăн хатĕрлерĕ, ларма сĕнчĕ. Вăл çăм свитер çинчен вăрăм халат тăхăнса янă, пуçĕнче — яланхи берет, уринче—чăлхапуçпе çемçе пушмак. (Электрокамин çунать пулсан та, хваттерте сулхăнрах: çуртсене хутса ăшăтма тытăнайман-ха.)

— Хăçан ăшă параççĕ-ши, пĕлместĕн-и? — ыйтрĕ Аннушкин куçне журнал çинчен илмесĕр.— Октябрь пуçланиччен шăнтасшăн мар пулĕ те? Хывăнмалла марччĕ сан...

Вăл ура çине тăчĕ те, шалти пӳлĕмрен çанăсăр куртка илсе тухса, ман хулпуççи çине уртрĕ. Каллех ларчĕ, журналне тытрĕ.

Сăнран хăй сыв мар пек курăнмасть, çапах та тем пулнă ăна: салху, сассинче те, хусканăвĕсенче те яланхи хаваслăхпа йăрăлăхĕ çук.

Эпĕ телевизор патне пытăм, ăна лайăхрах ĕçлеттерем тесе, регуляторсене унтан-кунтан пăркаларăм, анчах мĕлке çав-çавах сикме пăрахмарĕ.

— Сӳнтер,— аллине сулчĕ Аннушкин,— иртенпех çунать.

Вăл журналне юнашар пукан çине хучĕ, çĕрелле тинкерчĕ, пĕр хушă нимĕн шарламасăр вăрăм хитре пӳрнисемпе креслăна тăкăртаттарса ларчĕ. Çын умĕнче урăх вулам мар терĕ пулĕ те, анчах сăмах хускатма кăмăл тумарĕ.

Эпĕ ăна ялсем тăрăх кайса çӳрени çинчен каласа патăм. Вăл, пӳрнисемпе креслăна такăртаттарса, çап-

лах-ха кичеммĕн çĕрелле пăхса ларчĕ. Итлемерĕ те пулас ман сăмаха.

— Кофе ĕçетĕн-и? — ыйтрĕ, эпĕ калаçма чарăнсан.

— Ĕçес, ĕçес! — терĕм, хамăн хаваслăхăмпа ун кăмăлне те çĕклентересшĕн пулса.

Аннушкин кухньăналла утрĕ. Эпĕ уçă журнал çине пăхрăм та аялтан кăвак чернилпа туртнă сăмахсене вуларăм: «Живопись — ытла та йывăр искусство. Кунта генисем çеç хăвăрт ӳсме пултараççĕ-тĕр. Ăнăçсăрлăх çирĕп кăмăллă художника нихçанхинчен те тимлĕрех ĕçлеме хистет, çемçешкесене вара ӳсĕм патне çитмелли кĕске, çăмăл çул шырама тĕртет. Живопись вăл художникшăн драма та, паттăрлăх та. Ку ĕçре пурте вăй çитереймесçĕ...» Страница хĕрринче, пушă вырăнта, алăпа çырнă сăмахсем: «Туйрăм, чухларăм живопись паттăрсене çеç юратнине. Эпĕ — кĕске çулпа, çăмăл çулпа утма хăнăхнă хевтесĕр çын. Ман пеккисене искусство юратмасть, манашкаллисем искусствăна кирлĕ мар».

Эпĕ, сĕтел патĕнчен пăрăнса, пӳлĕм тăрăх уткаласа çӳреме тытăнтăм.

Мĕн пулса иртет-ха? Мĕншĕн кирлĕ пулнă Аннушкина ку сăмахсем? Çак статьяна, çак сăмахсене тупса вуласшăнах çавăн чухлĕ журнал, çавăн чухлĕ кĕнеке сарса пăрахнă-и вăл хăй йĕри-тавра? Сăмахĕсем тĕрĕсси тĕрĕсех-ха ĕнтĕ, анчах мĕн çĕнни пур вара вĕсенче Анатолий Семеновичшăн? Кам пĕлмест живопись йывăр искусство иккенне? Антив, çакна халиччен Анатолий Семенович та тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса çитереймен, чунĕ-чĕрипе туйса илеймен пултăр. Çапах та, «туйрăм, чухларăм» тесе, мĕншĕн-ха унăн хăйĕн пĕтĕм ĕçĕ çине хĕрес хумалла, хăйне ку териех тиркесе тăкмалла? Мĕншĕн? Мĕн пулнă?

Аннушкин куркапа кофе килсе лартрĕ те журналсемпе кĕнекесене пуçтарма тытăнчĕ.

— Пĕлетĕн-и, Сергей Андрейч, эпĕ... эпĕ — çав тери япăх художник,— паян килнĕренпе те пуçласа куçран пăхрĕ вăл мана.

— Чехов та хăйне ниме тăман драматург тесе тиркенĕ. Кайран нумай та вăхăт иртмен, унăн пьесисене чи чаплă театрсем лартма тытăннă. Ăнланмастăп эпĕ сан сăмахусене, Анатолий Семенович. Классика тухасса таçтан малтанах сиссе тăмастăн пулĕ-çке? — шӳтлерĕм эпĕ, Аннушкин ăшчиккинче пулса иртнĕ улшăнусене пачах та сисмен пек.

— Ан кул! Ан кул! — пуçне пăркаларĕ художник,

çаплах-ха ман куçран пăхса.— Пĕлетĕн пулсан, манăн пĕртте шӳтлес, шăл йĕрес кăмăл çук. Хама хамăн тишкĕрсе тĕрĕслемелли вăхăт çитрĕ. Тĕрĕслерĕм те акă — çук иккен манăн искусствăшăн чи кирли. Сӳрĕклĕхпе хевтесĕрлĕхĕме çĕнтерме хал çук! Алă хусканăвĕсене, ăс-тăна, туйăма пăхăнтарма пĕлни çук! Халиччен ăс-тăнпа туйăм вырăнне алă çеç ĕçленĕ манăн! Ăнлантăн-и, алă çеç!

— Çук, нимĕн те ăнланмастăп, Анатолий Семенович,— хулпуççисене сиктерсе илсе пӳлтĕм ăна.—Кала-ха, мĕн пулнă сана? Ăçтан пырса кĕчĕ кун пек тӳнтерле шухăш?

— Çĕнĕ картина ӳкерме тытăнтăм,— диван çине пырса ларчĕ Аннушкин.— Таçта пĕр-пĕр сăрт хĕррине е вăрмана кайса мар, мастерскойрах ӳкерме тытăнтăм. Пуçра пĕтĕмпе пиçсе çитнине, асăмра пин хут чĕрĕлсе хама шухăшлаттарса çӳренине... Анчах, вĕлер те, çук иккен манăн çавăн чухлĕ шухăшран чи кирлине суйласа илсе пĕр тĕвве çыхас пултарулăх! Халиччёнхинчен темиçе хут авантарах ӳкерес килет. Хам, ав, тытăнатăп та çавăнтах пăрахатăп. Шухăшлама пĕр тĕрлĕ шухăшлатăп, сăркăç тепĕр тĕрлĕ тăвать. Тĕрĕссипе каласан, пуçра та тĕтре çеç-ха, уççи-хуппи çук, çавăнпа асапланатăп та чи кирлине тупаймасăр. Мĕнле калас, шырасан-шырасан тупăп та-и ăна, анчах хăнăхман-çке эпĕ хама хам тертлентерсе ĕçлеме!..

Анатолий Семенович диван çинчен тăчĕ те, аллисене çурăмĕ хыçне тытса, чӳрече патнелле утрĕ.

— Харпăр хăй ĕçне тиркесе хаклама пĕлни аван-ха вăл,— лăплантарма тăрăшатăп художника.— Анчах кирлех-ши кунашкалах хуçăлма? Сăлтавĕ те çук унашкалах хуçăлма. Халăх килĕштерет сан картинусене...

— Эх, калаçас марччĕ кирлĕ мар сăмаха, Сергей Андрейч,— йӳççĕн кулса илчĕ художник.— Ытла та уçă кăмăллă, ырă чунлă вăл пирĕн халăх, çавăнпа мухтать. Хавхалантарас шутпа, малашне чăтăмлăрах, тăрăшарах ĕçлеттересшĕн шанса мухтать. Эпир пур—эх, васкатпăр, ниçта кайса кĕрейми васкатпăр, тăванăм... Халăха мĕн усă тăвасси çинчен шухăшламасăр картина хыççăн картина сăрлатпăр — ĕлкĕресчĕ çеç çĕнĕ выставкăна! Пĕрре иккĕ те мар-ха, темиçе картина тăратма ĕлкĕрес! Курттăмăн! Акă мĕнле вăл... Çавăн пек чухне мар-и ĕнтĕ художник пахалăх çинчен шухăшлама пăрахать? Суриков та çапла ĕçленĕ пулсан? Тухатчĕ-и унран Суриков?

Унăн чаплă картинисене пӳрнепе те шутласа кăларма пулать, анчах та мĕн тери вăй, мĕн тери туйăм тапса тăрать вĕсенче, э? Акă ăçта вăл художника вилĕмсĕрлĕх кӳрекен хăват!

Вăл каллех диван çине пырса ларчĕ те, сылтăм чĕркуççине аллисемпе тытса, пĕтĕм кĕлеткипе сулкаланасулкалана илчĕ, унтан каллех сиксе тăчĕ.

— Çапла, çапла, тăванăм! Художник картини стенари шăтăк-çурăка пытармалли шпалер та, штукатурка та мар. Вăл — искусство произведенийĕ. Эппин, пирĕн выставка залĕсенчи стенасене мĕнле те пулин тултарасси çинчен мар, çынсен чунне шухăш-туйăм хăвачĕпе, ытарайми илемпе тытса илекен картинăсем ӳкересси çинчен шухăшламалла. Антив, сахал пулччăр та — лайăх пулччăр!

Аннушкин ман ума çывхарчĕ, тем калас пек чĕнмесĕр пăхса тăчĕ-тăчĕ те айккинелле пăрăнчĕ.

— Уйăх ытла çĕнĕ картина çыраймарăм та — шăлтăрах кайрăм! — терĕ, хăйĕнчен хăй кулса.— Чăнах та çемçешке мар-и эп! Ансат ĕçе çеç кăмăлламастăп-и!

Часах пирĕн сăмах-юмах урăх йĕр çине ӳкрĕ. Халĕ ĕнтĕ Анатолий Семеновичăн кăмăлĕ самаях уçăлчĕ. Эпĕ киле кайма пуçтарăнтăм. Паçăрах-ха, кунта килсенех, эпĕ Бианка çуккине асăрханăччĕ, вăл ăçтине ыйтас шухăш та пурччĕ, анчах сăмах хушшинче манса кайрăм пулас. Халĕ тин, алăк патĕнче, хамăрăн пĕчĕк тусăмăра асăнтăм та, Анатолий Семенович сăнĕ çавăнтах тĕксĕмленчĕ.

— Бианка-и? — терĕ вăл, куçне тартса.— Бианка... Çук ĕнтĕ Бианка... Çухалчĕ Бианка, пахчана кайнă чухне çĕтертĕм...

Алăк патĕнче тĕттĕмрехчĕ. Анатолий Семенович стена çумĕнчи шурă плафонлă лампăна çутма тăчĕ, анчах «Бианка» сăмаха илтрĕ те — ахăртнех, сăнĕ улшăннине кăтартас килмерĕ — аллине усрĕ. Çапах та эпĕ ун куçĕнчи ăшă хĕлхем самантрах сӳннине те, тути чĕтресе илнине те асăрхаса илтĕм.

«Анатолий Семенович ытла та пăлханни Бианка çухалнипе çыхăнман-ши? Бианка çĕтни çапла хуçса хăварман-ши ăна?» — шухăшларăм эпĕ хам ăшра. Çапла шухăшларăм та йытă çуринçе аса илнĕшĕн хама хам вăрçса илтĕм, Анатолий Семеновича лăплантарма васкарăм:

— Юрĕ-çке, мĕн тăвас-ха... Йытă çухалнăшăнах пуçа усас мар...

— Тӗрӗс, тӗрӗс...— терӗ Аннушкин тытӑнчӑкрах сассипе,— йытӑшӑнах пуҫа усас мар...

Манӑн ӑна шӑпах ҫапла, йытӑ ҫухалнӑшӑн ытлашши хуҫӑлманнине пӗлтерсе, калаҫтарас килнӗччӗ, ҫак сӑмахсене кӗтнӗччӗ эпӗ унран, анчах илтрӗм те — тӗлӗнерех пӑхрӑм ун ҫине: хамӑрӑн пӗчӗк тусӑмӑр ҫӗтни нивушлӗ темех мар уншӑн?

Анчах художник ҫавӑнтах, куҫне хӑвӑрт аяккалла тартса, алӑк хӑлӑпне туртрӗ.

«Аннушкин пултарулӑхӗнче тепӗр тапхӑр пуҫланать. Урӑх нимӗнрен те мар, ҫавӑнтан ҫеҫ килет унӑн ку. Пултарулӑхри ҫӗнӗ тапхӑр та лӑпкӑн, ним систермесӗр тапранмасть иккен. Эппин, чаплӑ ӳсӗмсем кӳччӗр сана, Анатолий Семенович, умӑнти ӗҫсем». Ҫапла шухӑшласа таврӑнтӑм эпӗ киле. Вӑл мӗншӗн сӑнран улшӑнса, «йытӑшӑнах пуҫа усас мар» тесе каланине те, хваттер алӑкне мӗншӗн ҫапла васкаса уҫнине те тӗрӗс ӑнланайман эпӗ ун чухне. Йывӑр пулнӑ ӑна Бианка пирки сӑмах хускатма, ӑшне ҫӗнӗрен ҫунтарма тытӑннӑ хуйхипе ҫын умӗнче тӑма. Ҫавӑнпа килӗшенҫи тунӑ вӑл ман сӑмахсемпе, ҫавӑнпа васканӑ та мана хӑй килӗнчен кӑларса яма. Ҫам пӗлет, тен, тата эпӗ йытта йытӑ вырӑнне ҫеҫ хурса калаҫни те унӑн кӑмӑлне хуҫрӗ, манпа часрах уйрӑлма васкатрӗ пуль ӑна...

Ҫапла, Бианка, шӑпах Бианка кисретсе вӑркатнӑ ҫавӑн чухне Аннушкин ӑшчиккине. Куна эпӗ кӑшт каярахпа ҫеҫ тарӑннӑн ӑнланса илтӗм.

Тепӗр каҫхине, Анатолий Семеновича курас тесе, эпӗ иртерехех урама тухрӑм, хамӑр маршрутпа темиҫе хутчен те уткаласа ҫаврӑнтӑм, анчах тӗл пулаймарӑм. Эрне иртрӗ, эрне хушшинче пӗр каҫ та уҫӑлма тухмасӑр сиктермерӗм—ҫапах та кашнинчех пӗр-пӗччен ҫӳреме тиврӗ. Тахҫан Бианка пӗрле савӑнӑҫлӑн, телейлӗн чупса пынӑ ҫулпа пӗр-пӗччен утма питех те кичем-мӗн. Пӗр каҫхине ҫур ҫултанах каялла таврӑнтӑм, тепринче тухмарӑм та.

Октябрь варринчех юр ҫуса лартрӗ, ҫанталӑк сивӗтсе пӑрахрӗ. Вырсарникун Атӑл хӗррине антӑм та хамӑн йывӑҫ кимме ҫыран хӗрринчен ҫӳҫесем айне сӗтӗрсе хӑпартӑм, унтан, чун туртмӑш Атӑла пӑрахса каяс килменнипе, шыв хӗррипеваскамасӑр тӑвалла утрӑм.

Ура айӗнче нӳрлӗ юр нӑтӑртатать, виҫ-тӑват утӑмрах, сылтӑмра, шӑнса ӗнтӗркенӗ Атӑл сӗлкӗшлӗ хумӗсене лӳпперрӗн йӑвантарса юхать. Ун ҫийӗн шӑвӑнакан юр-пӑр катрамӗсем, анлӑ урампа иртсе пыракан пысӑк-пысӑк

кĕтӳ евĕрлех татти-сыпписĕр анаталла тăсăлса каяççĕ.

Çӳлте, чăнкă çыран хĕрринче, ретĕн-ретĕн ларса тухнă дачăсем курăнаççĕ. Çаралнă çамрăк йывăççен тайлăк кативаррипе Атăл хĕррине тимĕр картлашка анать. Эпĕ, ун тăрăх улăхса, самаях пысăк сада кĕтĕм те ним шухăшсăр енчен енне пăхкаласа утрăм. Ансăртран курах кайрăм: чӳречине хăмапа çапса хупланă дачăран Анатолий Семенович тухать. Вăл алăка питĕрчĕ те, пахча варринелле кĕрсе, курăнми пулчĕ.

Эппин, çакă иккен-ха Аннушкинсен дачи. Пĕчĕкçĕ кăна тăваткал пахча, тăррине шифер витнĕ çӳллĕ, чартаклă симĕс пӳрт, улмуççисем, чие, хăмла çырли, хурлăхан тĕмĕсем... Кĕрсе курам çула май пек, пĕр килнĕскер.

Эпĕ ним сасă тумасăр ерипен калинкке алăкне уçрăм та дача çумĕнчен çаврăнса шалалла иртрĕм. Анатолий Семенович пахча варринчи астрăсем хушшинче тăрать, тăм тивсе çеçки хĕррисем кăштах хуралнă пулин те, çавçавах хăйсен ытарайми илемĕпе кăмăла ачашлакан кăвак, шурă, хĕрлĕ чечексене пĕрерĕн-пĕрерĕн суйласа татать. Вăхăтсăр килсе çитнĕ хĕл сиввине çĕнтерсе, çавçавах чĕрĕ-сыввăн ларнăран-ши, пушшех те чиперрĕн те илĕртмелле курăнаççĕ пек халĕ вĕсем. Шурă юр çинчи, хура хăмăр йывăр пĕлĕтсем айĕнчи çак ачаш та хаваслă илем ман куçа тыткăнларĕ çеç мар, чĕрене те темле çатăрах ярса илнĕн туйăнчĕ.

Аннушкин тӳрленсе тăчĕ те татнă чечекĕсене майлатрах тытрĕ, вĕсене такама сĕнес пек аллине малалла кăнтарса, пĕкĕрĕлсе, майĕпен пахчан кайри кĕтессинелле утса кайрĕ. Унта çитсен, вăл юр çине чĕркуçленчĕ, чечексене пĕчĕкçĕ тĕмеске çине саркаласа хучĕ. Унтан хуллен çĕкленчĕ, чĕркуççи çумне çыпçăннă юрне шăлса тасатрĕ, хăй тĕллĕн темскер калаçса илчĕ. Эпĕ пĕр сăмаха çеç лайăххăн илтрĕм: «Бианка...»

Авă епле! Çак пĕчĕкçĕ тĕмеске Бианка вилтăпри пулчĕ иккен-ха... Çавăн çине чечексем пырса хучĕ Анатолий Семенович... Эппин, темшĕн суйнă мана Аннушкин: Бианка çухалман, вилнĕ вăл.

Эпĕ, кунта вăхăтсăр та вырăнсăр килсе кĕнĕскер, халĕ ним тума пĕлмесĕр дача кĕтессинчен пăхса тăратăп. Курăнмалла-ши, курăнмалла мар-ши манăн Анатолий Семеновича? Çапла, «çухалчĕ Бианка»,— тенĕччĕ мана Анатолий Семенович. «Вилчĕ»,— тесе калас килмен унăн — йывăр пулнă ăна «Бианка вилчĕ» темешкĕн...

Анатолий Семенович, юр ашса, дача еннелле утса

килет, Эпĕ çаплах, акă, ним тума пĕлмесĕр ун çинелле пăхса тăратăп.

Вăл, самантлăха чарăнса, каллех хăй тĕллĕн калаçса илчĕ. Чечексемпе калаçрĕ вăл хальхинче:

— Бианкăшăнах сивве чăтса ларатăр пулать-и... Ларăр çав, ларăр. Тепĕр икĕ кунтан каллех килĕп те, сире тата-тата, каллех Бианка тăпри çине хурăп...

Эпĕ, хăвăрт çаврăнса, калинккерен тухрăм та урам пеккипе утса кайрăм.

Унччен те пулмарĕ, Анатолий Семенович сасси илтĕнчĕ.

— Сергей Андрейч, чим-ха...

Эпĕ чарăнса тăтăм.

— Ăçта эсĕ? Мана шыраса килмерĕн пулĕ? — Вăл васкамасăр калинкке патне пырса тухрĕ.

— Кимĕ пăхма аннăччĕ... Кимĕ пекки пур ман, кивĕскер...

— Эсĕ... ăнлантăн пулас...—аллине хыçалалла тытса, пуçĕпе пахча еннелле сулчĕ Аннушкин.—Ăнланнăран пăрăнса кайма тăтăн. Çапла-и?

— Суяс мар, Анатолий Семенович, тĕрĕс,— пытармарăм эпĕ.— Çапах та... мĕнле пулса тухрĕ-ха ку?.. Мĕнле вилчĕ Бианка?

Вăл, хаш! сывласа илсе, пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан каласа пачĕ.

## III

...Пахчана пырса кĕрсен, Аннушкин чи малтанах дача чӳречи ванчăккине асăрхарĕ, ним те ăнланмасăр пуçне пăркаласа алăка уçрĕ. Шалта пĕр япала та вырăнта мар: йăлтах айăн-çийĕн çавăрттарса пĕтернĕ, пăтратнă, аркатнă. Минтерсене çурса, тĕкне силлесе тăкнă, стена çумĕнчи картинăсене урайне пенĕ. Ку та çитмен-ха — нӳхрепрен илсе тухнă варени банкине вырăн çинче ватнă та тӳшеке йăлтах варенипе вараласа пĕтернĕ.

— Кур-халĕ, Бианка, э? — алăк умĕнче ларакан анчăкпа калаçрĕ Аннушкин.— Мĕн тери йăх-яхсем тупăнаççĕ тĕнчере, çапла-и? Юрĕ-çке, макăрас мар, япала тем мар: пулать те, пĕтет те вăл. Чыс тени, намăс тени çук пулсан вара — хăрушă, ай-ай, хăрушă, Бианка... Куна вĕсем пирĕн ăпăр-тапăр япаласенчен мар, хăйсенчен хăйсем кулнă, хăйсене çапла вараланă, хăйсен нишлĕ чунĕ-

сене çапла ирсĕрлесе пĕтерне тесе шутлăпăр. Çаплах шутлăпăр, Бианка...

Анатолий Семенович парник валли усракан икĕ вăрăм хăмана алă пăчкипе татса темиçе пĕр тан татăк турĕ те вĕсемпе чӳречене тул енчен тачă çапса лартрĕ, ĕçне пĕтерсен, пахчаран тухса, чӳрече çинелле аякран сăнаса пăхрĕ.

— Хитре-и халь пирĕн дача? Çук, илемĕ кайрĕ унăн,— татах калаçрĕ художник хăйĕнчен шит те юлман йытăпа.— Çавă çав, япалан илемĕ пĕтни кирлĕ хăшпĕр ăçтиçуксене. Йывăç курчĕç — хуçса антармалла вĕсен, хунар çакăнса тăрать — çапса ватмалла, хитре пуканкресло çине ларчĕç — касса-çĕтсе пăсмалла. Çавсене пулах хӳме тенине çуллĕрех тытма тăрăшатпăр, çăра тенине тĕреклĕреххине те пысăкраххине шыратпăр, чӳрече касатпăр та çавăнтах решетке çапса хуратпăр. Ну, юрĕ, тусăм, çитĕ вĕсем пирки калаçса. Сăмах тĕшне тăмаççĕ çав çӳп-çапсем. Атя, анса курар, пĕрех хут, Атăл хĕррине.

Теплерен пĕрре Анатолий Семенович дачăна сутса ярас шухăш тытнăччĕ. Шухăшĕ ку çил варкăшĕ майлăрахскер пулчĕ те пуça килсе сĕртĕннĕ-сĕртĕнмен сӳрĕлчĕ. Хальхинче акă çулăхсах çулăхрĕ çак шухăш, пуça савăл пек кĕрсе ларчĕ.

— Сутса ярас, Бианка, дачăна,— калаçрĕ Аннушкин килелле утнă май.—Ачасем çӳресшĕнех мар унта, амăшĕ урисем ыратнипе аптăрать. Сутса ярар та пулар мар урăхран çав путсĕрсен мăшкăлĕ, э?

Киле çитсен, вăл кун пирки арăмĕпе те, ачисемпе те калаçса илчĕ. Лешсем хирĕç пулмарĕç. Аннушкин вара пĕлтерӳсем йышăнакан бюрона кайрĕ.

Дача туянас текен çын часах тупăнчĕ. Вăл телефонпа шăнкăравларĕ те сада хальтерехех çитсе курма кăмăл турĕ. «Хальтерех-тĕк, хальтерех пултăр. Эпĕ тумланатăп, эппин. Эсир те тӳрех пырăр, лере тĕл пулăпăр»,— сĕнчĕ ăна Аннушкин. Вара вăл сада епле каймаллине ăнлантарчĕ, дача номерне каларĕ.

Çумăр пĕрĕхнине пула Бианкăна хăйпе пĕрле илессĕн марччĕ Анатолий Семенович, анчах йытă çури хăйĕнчен юласшăн маррине, вăл алăк патне чупа-чупа пырса йынăшнине, куçран тилмĕрсе пăхнине курчĕ те — пăрахса хăвараймарĕ.

Хăйĕн вилĕмне сиснĕ пек, кĕтнĕ пек, нихçанхинчен те чăрсăрланса вĕре-вĕре ыткăнчĕ çав кунхине Бианка

машинăсем хыççăн. Нефтебазăна каякан, унтан таврăнакан пĕр машинăна та ывăниччен хăваламасăр иртерсе ямарĕ. Çумăрĕ пĕрĕхет те пĕрĕхет. Асфальт çу çĕрнĕ пек йăлтăртатать. Бианка самантрах тăп-тăр пылчăк пулса пĕтрĕ. Çапах та Анатолий Семенович ăна алла тытасшăнччĕ, машинăсем çӳренĕ çĕртен иртиччен те пулин йăтса пырасшăнччĕ. Çавăнпа та ăшша пиçиччен чупрĕ вăл ун хыççăн, ăна темле те илĕртсе чĕнчĕ, хăтăрса та пăхрĕ, анчах тыттармарĕ Бианка, çывăха ямарĕ. «Вăхăт çук! Ерçместĕп! Халĕ-и ман санăн аллунта пулмалла? Ав, мĕн чухлĕ машина иртет!» — тенĕн çеç çаврăна-çаврăна пăхрĕ вăл мăнкăмăллăн та ĕçлĕн.

Тытатчĕ те пуль ăна Анатолий Семенович, тытатехчĕ пуль, анчах пĕр палламан çын йывăç сутакан склад ăçтине ыйтрĕ те, Аннушкин ăна çул кăтартма чарăнса тăчĕ. Палламан çынна ик-виç сăмах каласанах Бианка чупса кайнă еннелле çаврăнса пăхрĕ вăл, пăхрĕ те анчăк бензовоз умĕнче ним тума пĕлмесĕр кутăн-кутăн чакнине курчĕ. Унтан шофер машинăна кăштах пăрчĕ... Выртса юлчĕ вара Бианка çул хĕррине, тем каласшăн пулнăн пуçне çеç кăштах çĕклеме пултарчĕ...

— Бианка!! Пĕчĕкскерĕм!! Ылтăнăм!!. Пĕтрĕн-иç, Бианкăм!! — сăмахсене ĕсĕкленĕ чухнехи пек тытăнчăклăн тата-тата каласа, йытă патнелле чупрĕ Аннушкин. Чупса çитрĕ те ăна алла йăтса илчĕ, куçĕнчен хурлăхлăн тĕмсĕлсе пăхрĕ — ĕнтĕ пĕчĕкçĕ чунăн сывлăшĕ те тухми пулнă.

Шофер, машинине чарса, кабинăран йăраланса тухрĕ, цистерна урлă хыçалалла пăхрĕ, унтан ларчĕ те малалла вĕçтерчĕ.

Утса пырать ĕнтĕ Анатолий Семенович çемçелсе кайнă Бианкăна кăкăрĕ çумне çупăрласа тытса, çул варрипе утать, хăй ăшран тăвăнса тухакан сасăпа ача пек ĕсĕклесе пăшăлтатать:

— Вилтĕн, пĕчĕкскерĕм... упраймарăм сана, чечекĕм, упраймарăм...

Бианкăн кăштах хупăннă куçĕсем сӳнме ĕлкĕрейменха, вĕсем чĕрĕ чухнехи пекех ăшшăн та шухăшлăн пăхаççĕ, хускалмаççĕ çеç. Сехет каялла кăна-ха вăл кам ăçталла утни-иртнине, кам мĕн тунине диван çинче çапла тинкерсе выртатчĕ. Çук-ха, ĕненес килмест Аннушкинăн Бианка вилнине, вăл ăна халь-халь пуçне çĕклессĕн, пуçĕпе сĕртĕнсе ачашланассăн туйăнса пырать.

Хирĕç килекенсем, Анатолий Семенович тĕлне çитсен,

чаранса тăрсах ун çинелле пăхаççĕ, куççулĕ юхтарса утакан ватă çынна шеллесе, пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă йытă çурине хĕрхенсе, хăйсем тĕллĕн шăппăн калаçкаласа илеççĕ. Машинăсем те чарăнаканнисем пулчĕç, шоферсем те пăшăрханса сăмахларĕç. Пурте пĕр мар çав çынсем...

Пахча калинккинчен кĕрсен, Анатолий Семенович Бианкăна дача умĕнчи сĕлĕпус курăкĕ çине пырса хучĕ. Курăкне куна Анатолий Семенович çуркунне хăй акса хăварнăччĕ. Часах шăтмарĕ-ха вăл, шăтса тухсан вара хăвăрт та парка çитĕнчĕ. Юрататчĕ Бианка çемçе курăк çинче выляма — сĕлĕ пуçĕсене сике-сике хыпатчĕ, йăваланатчĕ ун çинче, хырăмĕпе шăватчĕ. Пĕлетчĕ çав чĕрĕ чун çутçанталăк илемĕпе киленсе савăнма, выляса ывăнатчĕ те вара, кăлтăрмач пек хутланса выртса, çавăнтах çывăрса каятчĕ. Нумай та вăхăт иртместчĕ, вăл хуллен çĕкленетчĕ те, тутлăн анаслаcard, карăнкаласа илсе, пахчаран тухатчĕ. «Бианка! Хăвар пушмака, Бианка! — илтĕнетчĕ кӳршĕсен пахчинче хĕрарăмсем кăшкăрни.— Курăр-ха, пушмака çĕклесе каять!» Вара «пĕчĕк вăрă» пушмака пăрахса хăваратчĕ те, хăйĕн хуçипе кӳршĕсем калаçнине итлес пек, вĕсем çинелле аякран пăхса тăратчĕ.

Çăва тухарахпа Анатолий Семенович ăна пуçласа Атăл хĕррине илсе аннăччĕ. Çавăн чухне Бианка пĕрпĕрне хăваласа çывхаракан хумсем çине пăхса тăчĕ-тăчĕ те чуптара пачĕ вĕсене хирĕç. Анчах шыв çийĕн чупма та, унăн хумĕсемпе выляма та çук иккен. Вăл вара, хăй урлă кусса иртнĕ хумсем хушшине лекнĕскер, йынăшса ярса, çыран хĕррине сирпĕнтерсе тухрĕ. Сике-сике вĕрчĕ йытă çури хăйне таракат йышăнман хумсем еннелле, шăпăл-шапăл чӳхенекен шыв кăларса ывăтакан кăпăксене пĕчĕк сăмсине пĕркелентерсех çырта-çырта çĕмĕрĕлчĕ.

Кăштахран вĕсем хĕрлĕ çыр çамкипе сукмаксăр-мĕнсĕрех сад еннелле хăпарса кайрĕç. Аякран пăхма ытла çӳллех те курăнман çыран улăхса пĕтмелле мар чăнкă сăмсах иккен. Çитменнине тата кĕрпе пек тăпра, пуснăпусман хускалса, шăкăр-шăкăрр! аялалла юхать. «Ак хайхи! Ывăнса та çитрĕм мар-и? — шухăшларĕ Анатолий Семенович, урисем чĕркуççи тĕлĕнче чĕтре пуçланине туйса.— Ак тамаша! Халех капла пулсан, епле хăпарса çитес?!». Вăл хыçалалла пăхрĕ те—йăнн! çаврăнса кайрĕç аялти тĕмсемпе кимĕсем. Çаврăнасса çаврăнмĕç-ха вĕ-

сем, хăйсен вырăнĕсенчех пулĕç — пуç çавранса кайрĕ. «Сулăнса кайăп та чул пек кусса анăп,— шикленсе шухăшларĕ Анатолий Семенович.—Алла тымар тавраше те пулин лекинччĕ хуть, çатăрласа тытăттăмччĕ те, пĕр кана сывлăш çавăрăттăмччĕ. Эх, ача-пăча! Ма килсе тăрантăмах ку вырăна? Пĕтмен иккен-ха ача чухнехи айванлăхпа çăмăлттайлăх...»

Çулĕ тертлĕ пулсан та, Бианкăна йăтсах пычĕ-ха Аннушкин. Хăрах аллипе вăл ăна хăй çумне хĕстернĕ, тепринпе çĕртен тыта-тыта тапаçланать. Тăпра хытăрах шапăртатса юхма тытăнчĕ ак, çыран пушшех те чăнкăланчĕ. «Ну, Бианка,— терĕ вара Анатолий Семенович,— тек йăтса пулмасть сана. Иксĕмĕрĕн те халь тăватă уран тапаçланма тивет. Ан юл, эппин, маттур пул». Бианка, чăн та, юлмарĕ унран, хуçи куçĕнчен пăха-пăха, хырăмпа шунă пек шăвăнса, çӳлеллех тапаçланчĕ.

Такамсен пахчи патне çитсе çамрăк пилеш айĕнчи çерем çине ларсан, Анатолий Семенович йытă çурине алла илчĕ те ăна вăрахчен пичĕ çумне çупăрласа ачашларĕ: ара, Бианка ӳркенсе е юнтарса çыр çамкинче тăрса юлмарĕ-çке-ха, каялла та анса каймарĕ! Çакна чăтăмлăх вырăнне те мар-ха, темле паттăрлăх вырăннех хучĕ Аннушкин. Йытă тени хуçине пĕтĕм чунĕпе парăннине кунтан ытла кăтартаяс та çук пек туйăннăран вăл ăна çаплах ачашласа юратрĕ, пусĕнчен лăпка-лăпка илчĕ, ăшă сăмахсем каласа мухтарĕ...

...Вăрахчен пуçне усса ларчĕ халь Анатолий Семенович дача çумĕнчи тăрăхла сак çинче, çĕрте выртакан Бианка çине пĕкĕрĕлсех пăхрĕ, унăн ытла та кĕске пурнăçĕнчи уйрăм самантсене аса илчĕ. Куçĕ çаплах уçă-ха йыттăн. «Итлемерĕм çав сана, ырă çыннăм, итлеменнипех хам пуçа хам çирĕм, сана хуйхă тупса патăм. Каçарах мана»,— тенĕн пăхать унăн тĕм-хура куçĕ.

Анатолий Семенович Бианкăн куç хупанкине пӳрнипе сĕртĕнчĕ кăна — йыттăн хура шăрçа пек куçĕ хупăнчĕ.

Художник ассăн сывласа ячĕ. Сывлани те мар, икĕ хутчен вăрăммăн ĕсĕклесе илни пулчĕ ку. Вăл ура çине тăчĕ, йĕри-тавралла пăхса илчĕ те каллех ларчĕ. Çумăр чарăннă ĕнтĕ, тӳпе кăштах тăрăлнă. Атăл леш енчен катрам-катрам пĕлĕтсем майĕпен шăваççĕ, йывăçсем хускалмасăр ларaççĕ, çил сисĕни-сисĕнми йăвашшăн вĕрет. Пăрахут сасси хăюсăррăн, татăла-татăла илтĕнет, кӳршĕсен пахчинче çерçисем чĕвĕлтетеççĕ.

Вăхăт шăвать. Аннушкин çаплах-ха Бианка умĕнче

ларать. Ҫаплах Атăл леш енчен катрам пĕлĕтсем сивлеккĕн юхса килеҫҫĕ; васкамасăр каҫаҫҫĕ, шухăша путса шăваҫҫĕ... Бианкăпа сывпуллашма килмеҫҫĕ-ши вĕсем? Бианкăпа сывпуллашас вăхăт ҫитнĕрен ҫапла шăпланмарĕ-ши ҫут тĕнче? Шăплан ҫав, ҫут тĕнче, хӳхле. Сипсимĕс курăк ҫинче хускалмасăр выртакан ҫак пĕчĕкҫĕ чĕрчун та пысăк тĕнчен пĕр пайĕччĕ. Ун пурнăҫĕ вăхăтсăр татăлнишĕн хурланма пĕлместĕн пулсан, хăвна та хаклама пĕлместĕн эс, пысăк тĕнче. Тем пекех пысăк, тем пекех анлă, хăватлă пулсан та, эс, аслă тĕнчеҫĕм, ҫакăн пек чунсенчен тăратăн. Эппин, вĕсене — пĕчĕккисене те, пысăккисене те—пĕр пек хаклани хăвăн пин-пин тĕрлĕ пуянлăхна, пин-пин тĕрлĕ илемне пурне те хаклани пулать пулĕ...

Анатолий Семенович кĕреҫе илчĕ те пахчан кайри кĕтессинелле утса кайрĕ, мăшăр чие хунавĕпе йĕплĕ хурлăхан тĕмĕ хушшинче шăтăк алта пуҫларĕ. Шăтăкĕ арча пек тӳрĕ кĕтеслĕ те тăпăл-тăпăл пулчĕ. Тăпри кăпăшка иккен кунта,— хĕрлĕрех тирĕслĕ тăпра. «Ĕнтĕ выртăн халь, пĕчĕкҫĕ тусăм, тӳшек пек ҫемҫе ҫĕрте»,— шухăшларĕ художник, унтан, макăрса ҫывăрса кайнă ача ыйхă витĕр ĕсĕкленĕ пек, каллех ĕсĕклесе илчĕ.

Ҫывăхрах такамсем калаҫни илтĕнчĕ. Аннушкин калинкке еннелле ҫаврăнса пăхрĕ те икĕ вăрăм арҫын кăнкан пăхкаласа ҫывхарнине курчĕ.

— Ак вăл хайхи дача! — терĕ пĕри.— Куратăн-и номерне? Ав, хуҫи те кунта!

Пахчана вăтам ҫулсенчи тăрнаккай этемсем килсе кĕчĕҫ. Йĕкĕрешсем пулас: иккĕшĕ те ансăр хулпуҫҫиллĕ, вăрăм пит-куҫлă, хĕрлĕ ҫӳҫлĕ, чĕкеҫ шатриллĕ; иккĕшĕ те ни хура, ни кăвак нейлон плащ тăхăннă, резина атăпа. Пĕрин пуҫĕнче сăран шлепке, теприн — ҫурăк сăмсаллă салтак карттусĕ,— уйрăмлăхне те ҫавна ҫеҫ асăрхарĕ художник ку этемсенче.

Вĕсем хăйсен ятне-шывне калаҫ те, «так-так» текелесе, пахчана пăхса ҫаврăнчĕҫ, дачăна кĕрсе тухрĕҫ.

— Мĕн хак ыйтатăн? — йĕс труба пек мĕкĕрчĕ карттусли, курас пеккине курса пĕтерсен.— Илекенни эпĕ. Телефонпа эп калаҫрăм паҫăр.

Анатолий Семенович сак ҫинче ларать. Тăрнаккай этемсем пахчана килсе кĕнĕ хыҫҫăн ларчĕ те вăл ҫакăнта, унтанпа йăшăл та хускалмарĕ.

— Сутмастăп дачăна,— типпĕн пĕлтерчĕ Аннушкин пуҫне ҫĕклемесĕр.

— Мĕнле — сутмастăп? — иккĕшĕ те харăсах мĕкĕрсе ячĕç йĕкĕрешсем.

— Çаплах... Улăштартăм шухăша...

— Чипер калаç-ха! — кулам пек турĕ карттусли.— Çакăншăн шапарса çӳрерĕмĕр пулать-и вара? Сада килсен те сехете яхăн шырарăмăр.

— Сутмастăп... Кąçарăр мана...

— Э-э, Кусма, инкек пулнă-иç ун,— Аннушкин хуйхине ăнланнăн калаçса илчĕ шлепкелли.— Ав, йытти вилсе выртнă...

Хайхискерсем, Бианка вилли патне пырса, пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕç.

— Шел,— терĕ шлепкелли.— Хитрескер-мĕн. Ӳссе те çитеймен пулас. Машина тавраш таптаман пулĕ?

— Машина таптарĕ.

— Шел, шел,— Аннушкин çумне пырса ларчĕ вăл.— Çапах та ытлашши ан хуçăл эсĕ. Хуйхăрнипе тин чĕрĕлсе тăраймĕ ĕнтĕ...

— Хĕ, тупнă тата хуйхă!—урине силлесе, атти çумне çыпçăннă пылчăка сирпĕнтерчĕ Кусма текенни.— Йытă вилнишĕн те пуçа усса ларсан! Вунă çул шоферта çӳресе, хам та теçеткипех таптанă вĕсене. Йытă тесе, нихçан та скороçе чакарман, машинăна та пăрман. Малашне те таптатăп: неччу çул çинче сĕтĕрĕнсе çӳреме!

Кăнн! тинкерсе пăхрĕ Анатолий Семенович ун çине, пăхрĕ те урăх никам та мар, Бианкăна шăпах çак çын таптаса кайнăн туйăнчĕ ăна. Халĕ вăл ун патне, унăн дачине туянма тесе килнĕ... Дачăна сутас шухăша паçăрах, Бианкăна пытарма шăтăк чавнă чухнех, пуçран кăларса пăрахнăччĕ-ха Аннушкин. «Çакăнта çуралтăн эсĕ, пĕчĕк тусăм, юрататтăнччĕ кунта килме. Ĕнтĕ яланах садра пулăн... Çулла та, хĕлле те, çуркунне те — яланах. Куллен тенĕ пекех çӳрĕп кунта, сан патна килĕп»,— хăй тĕллĕн калаçа-калаçа шăтăк чавнăччĕ вăл паçăр. Дачăна сутас шухăша пăрахăçламан пулсан та, ку этеме памастчех ăна Аннушкин, пӳрт çӳллĕш укçа сĕнсен те сутмастчĕ.

— Чипертерех калаç-ха, Кусма,— терĕ, тăванне вĕрентсе, шлепкелли.— Тем шухăшлĕ тата Аннушкин юлташ, ытла та путсĕр этем, тейĕ. Автомобиль-и, трактор-и—пурте вĕсем машинăсем. Вĕсем, тем тери хăватлă пулсан та, чĕрĕ чун тĕнчине хĕсме тивĕçлĕ мар. Пурнăç чĕрĕ чунра тытăнса тăрать, машина вара — пурнăçа лайăхрах тумалли хатĕр çеç. Эппин, ан тивтĕр, ан тĕкĕнтĕр

сан аллунти машина чĕрĕ чуна. Унран çӳлте пулма, ун çулне картлама нимĕнле тивĕç те çук сан аллунти машинăн.

— Пуçларĕ тата тепри! — итлесшĕн пулмасăр аллине сулчĕ те Куçма кулса ячĕ.— Ха-ха! Йытă вилни те философилемелли сăлтав-çке саншăн, Иван!

— Ухмахланса ан ахăр! — сассине хăпартрĕ шлепкелли.— Ăна-кăна шухăшлама пĕлмен çын — çын-и вăл? Пулĕ ӳлĕмрен, йытă-кушака таптанăшăн та ответ тыттармалли саккун пулĕ. Ку вăл çутçанталăкпа цивилизаци тарасине епле те пулсан пĕр шайра тытасчĕ тесе йышăннă пин мерăсенчен пĕри пулĕ.

Вăл самантлăха шăпланчĕ те йĕри-тавралла пăхса илчĕ.

— Мĕн тери тӳлек те илемлĕ, э? — терĕ тавралăхпа киленсе.— Нихăш вăхăтра та ытарма çук çав çутă тĕнчене. Çавăнпа пурсăмăр та юрататпăр ăна, пурсăмăр та пурăнас тесе тăрăшатпăр.

Вăл тепĕр хут Бианка çине куç ывăтрĕ те, ассăн хашлатса илсе, васкамасăр ура çине тăчĕ.

— Кайăпăр пуль, Куçма, каяр...

— Лайăх мар турăн, ай-ай, лайăх мар,— пуçне пăркаласа илчĕ Куçма, Аннушкин çинелле пăхса.— Çил пек вылянчăк шухăшлă çын пултăн иккен. Çӳçӳ кăвакарнă, ху, ав, пĕчĕк ачалла хăтланатăн. Мда-а...

— Сăмаха пĕлсе пупле, Куçма! — тарăхрĕ Иванĕ.— Курмастăн-и, кунтах пытарасшăн вăл йыттине! Çакăн хыççăн сутĕ-и-ха пахчине кама та пулсан? Хам та сутас çук!

Вĕсем тухса кайрĕç.

Тĕттĕмлене пуçларĕ пулин те, Аннушкин Бианкăна пытарма васкамарĕ-ха. Хăяр çеçкине кĕреплепе туракаласа пуçтарчĕ те çырмана кайса пăрахрĕ, бакри шыва юхтарса кăларчĕ, пӳрт хыçне купаласа хунă помидор шалчисене крыльца айне куçарчĕ. Бианкăпа уйрăлас килмест унăн, çавăнпа ĕç хыççăн ĕç тупса вăхăта ирттерет. Кăштăртатса çӳрет-çӳрет те йытти патне пырса ларать, хаш та хаш хуйхăрса калаçать.

— Сахал пурăнтăн, пĕчĕкскерĕм, ытла пит сахал... Пĕр çу каçрăн та...

Тавралăха каç сĕмĕ хупласа илсен тин Аннушкин, Бианка виллине кивĕ çăм кофтăпа чĕркесе, шăтăк тĕпне майласа хучĕ. «Урăх макăрам мар, йытăшăн ман пекех хуçăлакан этем чăнах та пулман пуль»,— тесе кăмăлне

хытарнăччĕ-ха вăл, анчах Бианкăна шăтăк тĕпне хурсан, чăтаймарĕ, тепĕр хут макăрса ячĕ.

...Тӳпере пăч-пач кăна çăлтăр курăнкалать. Ниçта пĕр сас-чĕвĕ çук. Кăштах вăхăт иртсен, пĕлĕтсем айĕнчен уйăх шуса тухрĕ, туратсем хушшипе çĕр çине чĕлтĕр çутă тăка пуçларĕ. Анатолий Семенович тĕмескене кĕреçепе унтан-кунтан тĕрткелесе тикĕслерĕ, тӳрленсе тăчĕ:

— Пахчара ĕмĕрлĕхех канăç тупрăн ĕнтĕ, пĕчĕкскерĕм...— пăшăлтатрĕ вăл хăй тĕллĕн.— Кайрăн, тек пулмастăн эсĕ пирĕнпе... Выртах... Çăмăл пултăр тăпру...

Вăл йĕри-тавра пăхса илчĕ те, уйăх тĕтреллĕ çутă сапаланине асăрхасан, кăмăлĕ кăштах çĕкленчĕ. «Уйăх çутипе таврăнатăп иккен-ха киле»,— шухăшларĕ те Анатолий Семенович, ку шухăш та ăна хурлантарса ячĕ: «Çакăн пек уйăхлă каçсенче садран Бианкăпа пĕрле каяканччĕ, халĕ ак... пĕччен...»

Килтисене вăл, чăннине каласа, ытла хытă хуйхăрттарасшăн пулмарĕ, «Бианкăна çухатрăм»,—тесе ĕнентерчĕ. Анчах хурланма ку та çителĕклĕ пулчĕ: хĕрачи куççульпех макăрса пĕтрĕ.

Виçĕ кун иртрĕ, çапах та Бианка Анатолий Семенович асĕнчен самантлăха та туха пĕлмерĕ. Тĕлĕкре те вăл çеç курăнчĕ ăна. Чĕмсĕрленчĕ художник, пусăрăнчĕ, пĕчченлĕхе кăмăллакан пулчĕ. Ларать вăл çапла хăй пӳлĕмĕнче халат пĕркенсе — çав-çавах пĕчĕк тусĕ çинчен шухăшлать. Пахчаран Бианкăсăр таврăннă хыççăн килтисене ытлашши хурлантарасран асăрханнăччĕ, мĕн каласан аванрах-ши тесе шутланăччĕ, каярахпа вара вĕсем Бианкăна аса та илменшĕн кăмăлсăрланмах пуçларĕ: «Ăна тăрук çапла манма пирĕншĕн йытă çеç пулчĕ-ши-ха вăл? Чĕрĕ чухне пурте унпа выляса йăпанаттăмăрччĕ, халĕ Бианка асра-тĕсре те çук иккен...» — вĕчĕрхенчĕ Анатолий Семенович. Вăл, çапла шухăшланипе çеç лăпланмасăр, мăшăрĕпе ачисене сăмахпа тĕксе ӳпкев тума та хатĕрччĕ ĕнтĕ, анчах пĕррехинче чӳрече умĕнчех, урамра, йытă çури вĕрсе ячĕ те, амăшĕ те, хĕрачипе ывăлĕ те кантăк патне чупса пычĕç, пĕр хушă пăхса тăрсан-тăрсан вара салхуллăн, сăмах чĕнмесĕр пăрăнса кайрĕç: çук, Бианка мар... Вара тинех ăнланчĕ художник: пурин асăнче те пурăнать иккен Бианка, пĕр-пĕрне хурлантарас мар тесе çеç ун çинчен нихăшĕ те сăмах тапратмасть...

Вырсарникун Аннушкин пасара çитсе пăхрĕ. Йытă

çури туянасшăн пулчĕ вăл унта, шăпах Бианка пек шуррине, çавнашкалах пĕчĕкскерне шырарĕ, çĕнĕ йытă çурипе пĕрле хваттере каллех унчченхи савăнăç çутатса ярасса, пурин хуйхи те çил вĕçтерсе кайнă пек сирĕлессе шанчĕ. Анчах кăмăлне килĕшекенни тупăнмарĕ те, пушă алăпах килне таврăнчĕ. Кайран ак хăй çапла тиркешсе çӳренĕшĕн, киле нимĕнсĕр таврăннăшăн савăннă пек те пулчĕ, çĕнĕ йытă туянма шухăш тытнăшăн вара мăкăртатса та илчĕ: «Пасартан йытăпа таврăнса, Бианкăна манса каймаллаччĕ иккен-ха! Юрать-и çапла!» — терĕ вăл.

## IV

Эпир Анатолий Семеновичсен картишĕнче, вăрăм çуртăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çитиччен, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳретпĕр. Садра пуçланнă сăмах çаплах вĕçне тухса пĕтмест-ха, çаплах калаçать Анатолий Семенович.

— Пĕлесчĕ сан,— туйине çурăмĕ хыçне тытать художник,— нумай шухăшларăм эпĕ çак хушăра çутçанталăкпа пурнăç çинчен. Бианка чăнкă çыранпа тапаçланса хăпарни е хумсем айĕнчен сирпĕнтерсе тухни, е тата кăшт вăрçсанах пăшăрханнă-кӳреннĕ пек пăрăнса утни куç умне килсе тухать те хама хам çине-çинех, вĕçĕмсĕр калатăп: «Мĕн тери хаклă иккен эсĕ, пурнăç, мĕн тери илемлĕ! — тетĕп.— Нимĕнле сăмахпа каласа кăтартайми юратать сана чĕрĕ чун, пурнăç! Нимĕнле виçепе те виçме çук санăн хакна, пурнăç!» — тетĕп.

Аннушкин шăпланать. Пĕр хушă шухăша кайнă пек пулать те каллех — хальхинче ĕнтĕ хаваслăрах сасăпа — каласа пĕтермен сăмахăн енчĕкне пăлхатма тытăнать.

— Чăнах та, мĕнешкел телей вăл хĕвел тухса сарăлнине, курăк сăмсаланнине, лапка-лапка юр çунине, шăнкăртатса шыв юхнине курасси, илтесси, туясси! Пĕр маншăн-саншăн çеç мар, мĕнпур чĕрĕ тĕнчешĕн телей ку. Бианкăшăн, çав чĕлхесĕр янаваршăн, çаплах кулянатăп пулсан, эппин, ытла та çирĕп вăл çутçанталăкри пĕтĕм чĕрĕлĕхĕн асамлă çыхăнăвĕ, ытла та кирлĕ пĕр-пĕрне кашни чĕрĕ чун, кашни ӳсентăран!..

Этем пуринчен те ăслă, пуринчен те вăйлă тетпĕр пулсан, пуринчен те ăслăрах, вăйлăрах юратмалла унăн хăйпе пĕр çĕр çинче пурăнакан мĕнпур чĕрĕлĕхе, пуринчен те ытларах тăрăшмалла унăн ытти чĕрĕ чунсен килеслĕхри пурнăçĕшĕн. Шутласа кăларма пулать-и, калă-

пар, ӳсентăран этеме мĕн тери усă кӳнине? Хăш виçейĕ те пулин виçме пулать-и çав усă хакне? Тата мĕн тăватьха тепĕр этем çутçанталăк пуянлăхĕ-ырлăхĕ упрантăр, ӳстĕр тесе? Нимĕн те. Çутçанталăк ăна пĕр хăйшĕн кăна кирлĕ. Унашкал чун-чĕреллĕ этем — йывăç лартсан та, курăк аксан та — çак ĕçсене хăйне кирлĕшĕн çеç тăвать. Этем чи малтан хăйне мĕн-мĕн кирли çинчен çеç шухăшлать пулсан, хăйĕн ĕçне шалтан хистенипе тумасан, унăн ăшĕнче «хамăн кăна пурăнса юлас» текен шухăш йăва çавăрнă пулсан — лартнă йывăçĕ те лайăххăн чĕрĕлмест ун пеккин, курăкĕ те лайăххăн ешермест, кирек хăш япали те, чунтан тунă япала пулмасть. Çутçанталăкри пĕтĕм чĕрĕлĕхĕн аслă çыхăнăвне халĕ, моторсен шавĕ хытăран хытă илтĕннĕ чух, кантăк-бетон стенасем çӳлтен çӳле хăпарнă чух, уйрăмах çивĕччĕн туймалла та унăн тăтăлма пултаракан сыпăкĕсене çирĕплетессишĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла. Çав чи хăватлăран та хăватлă юратăва — пурнăça юратнине — хăвшăн çеç тăрăшса мар, кашни чĕрчун, кашни йывăç-курăк пурнăça хăвнашкалах вĕçĕмсĕр юратнине ăнланса упрамалла...

Аннушкинăн çак сăмахĕсене итлетĕп те вĕсем мана хам сăмахсемех пулса тăнăн, эпĕ Анатолий Семеновича мар, хамăн ăшри сассăма итленĕн туйăнаççĕ, эпĕ, çутçанталăк çинчен пуç тавра тарăнрах шухăшлама тытăнса, хампа хам калаçнăн туйăнма тытăнчĕ.

Çемçе юр çума пуçларĕ те, эпир кĕçех шур упасем пек пулса тăтăмăр. Ирĕксĕрех алăк умĕнчи хӳтлĕхе кайса тăма тиврĕ, унта иксĕмĕр та силленсе илтĕмĕр.

— Хула куç умĕнчех пысăкланса сарăлать, индустри хăвачĕ ӳсет, кунпа пĕрлех çынсем ытларах та ытларах чĕрчунсем патне туртăнаççĕ. Сисетĕн-и çавна? — ыйтрĕ те Аннушкин хăех хуравларĕ: — Сисетĕн, паллах... Çапла пулмалла та вăл. Мĕншĕн тесен этем капмар çуртсен вĕçĕ-хĕрсĕр кварталĕсене çеç курасшăн мар, машинăсен сассипе заводсен шавне çеç илтесшĕн мар, вăл çак çĕр çинче ытти чĕрчунсем те пуррине, вĕсемпе пĕрле е юнашар пурăнса, хăй çутçанталăк хуçи çеç мар, унăн пĕр пайĕ пулнине те сиссе-туйса тăрасшăн. Çавăнпа тĕлĕнместĕп те эпĕ теприсем хăйсен хваттерĕсене дендрари е чĕрчунсен кĕтесĕ майлă туса хунинчен.

Ауннушкин самантлăха шăпланать, юр çунине тинкернĕ май сăвă калама тытăнать:

> — Человек — хоть будь он трижды гением —
> Остается мыслящим растением.

С ним в родстве деревья и трава.
Не стыдитесь этого родства.

Маршак сăвви. Миçе хут аса килмерĕ-ши çак кунсенче...— Вăл мана хул айĕнчен тытса куçран тинкерчĕ: — Хăпарар мар-и хваттере? Паçăрах чĕнмеллеччĕ те, астăваймарăм, сăмах хушшине пулчĕ.

— Тавтапуç, Анатолий Семенович,—терĕм эпĕ.—Чĕннĕшĕн те, хамăн куçа-пуçа уçнă ăсла сăмахусемшĕн те пысăк тав. Кунтан пуçласа хам та ĕнтĕ çутçанталăк çине урăхларах пăхăп. Халиччен пит туйсах пĕтерейменнине туйрăм, шухăшласа çитермен япаласем çинчен шухăшлама пуçларăм... Килтисем çывăрма та выртрĕç пулĕ, вăрах çӳрерĕм...

— Апла хуть ăсатса ярам сана... Çавăн йышши шухăшсем канăç пами пулнипе юлашки вăхăтра хам ку таранччен ӳкернĕ пур картинăсене те тиркесе пăрахрăм. Пурнăç хăвачĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен тĕплĕн шухăшламасăр, çиелти илеме çеç курса ӳкернĕ картинăсем çеç халь вĕсем маншăн...

Таçта йытă вĕрсе ячĕ. Анатолий Семенович, чарăнса тăрса, ун-кун пăхкаласа илчĕ, тимлесе итлерĕ.

— Кур та тĕлĕн ĕнтĕ манран,— ассăн сывларĕ вăл.— Кашни йытă сассине, Бианкăнни пек мар-и тесе, танлаштарса итлетĕп. Е тата сасă илтĕннĕ еннелле утса каятăп та Бианка пекки мар-и-ха ку тесе курма тăрăшатăп хăйне. Ӳпкелетĕп те хама хам Бианкăпа пĕрле сăн ӳкерттерсе юлма тавçăрайманшăн. Фотоӳкерчĕкĕ те пулин ĕмĕрлĕхе юлатчĕ... Ана аса илсе, ӳкерме те хăтланса пăхатăп. Нумай асаплантăм ĕнтĕ, темĕн чухлĕ сăрă сая ятăм, темиçе пир тăрăхне çурса вакларăм — çук, тухмасть чи кирли! Куçа пĕр Бианка курăнать, пир çинче— тепри. Юлашкинчен, ширани тупăннă пекех туйăннăччĕ—каллех тиркерĕм... Ларать çамрăках мар çын кĕрхи пейзаж тĕксĕмлĕхĕнче,— хăй мĕнле картинăна пăрахăçлани çинчен калама пуçларĕ художник.— Ун умĕнче кăпăк пек шурă пĕчĕк йытă выртать. Çыннин сăнĕнче — хăйне хăй ӳпкелешни, каçармалла мар айăпа кĕни, хуйхă. Йĕри-тавра — çуллахи илемне çухатнă çанталăк. Вăл та тĕксĕм, вăл та хуйхăллă. Картина айĕнче пĕртенпĕр сăмах: «Виççĕн».

— Мĕншĕн — «Виççĕн»? — васкаса ыйтрăм эпĕ. Çавăнтах каласа та хутăм: — Ах, ăнлантăм: этем, чĕрчун, çутçанталăк. Çапла-и?

Аннушкин, хумханса калаçаканскер, туйине пĕрре çу-

рамĕ хыçне тытать, тепре хăй умĕнче çаваркалать. Мана тем пирки ӳкĕтленĕн, тилмĕрнĕн куçран пăхать.

— Пултаратăп-и-ха эпĕ çавăн пек картинăна халăха кăтартма? Çук, пултараймастăп! Антив, халлĕхе этем, чĕрчун, ӳсентăран тĕнчисем хушшинче тивĕçлĕ çыхăну пăсăлма тытăнни палăртăр. Этем çутçанталăка упрас енĕпе тăвакан ĕçсем халлĕхе цивилизаци утăмĕсенчен юларах пыраççĕ, ку тĕлĕшпе халлĕхе пурин те ăнланулăх çитмест, тейĕпĕр. Анчах çакă пире хуйха ӳкермелле тенине пĕлтермест вĕт-ха. Этем — вăйлă, ăслă. Апла пулсан, унăн ăсĕпе хăвачĕ çутçанталăка упрама çеç мар, ăна малалла пуянлатма та çитет. Акă мĕнле вăйпа ăсхакăла шанса мухтамалла пирĕн!

* * *

Çуркунне. Эпĕ каллех художество галерейине васкатăп. Унта çулленхи пекех, çурхи выставка уçăлнă. Пĕрремĕш зала кĕрсен, куçа тӳрех Аннушкин картини курăнса кайрĕ. Сăрламан йывăç рамка ăшĕнче — кĕç-вĕç çеçкене ларас, сывлăша пыл шăрши сарас çурхи сад. Улмуççи айĕнче пĕчĕк шĕвĕр сăмсаллă, тĕм-хура куçлă Бианка тăрать. Халĕ вăл хуçи куçĕнчен пăхать-ха, ак-ак ĕнтĕ кăштах кунталла çаврăнĕ те — мана асăрхĕ, шăнкăрав пек сассипе вĕрсе ярĕ, çăмăллăн ыткăнса килĕ. Мана хирĕç мар пулсан, теприне хирĕç чупса кайĕ вăл, хăйне лăпкаса-çупăрласа юратасса туйса, кирек кам çумĕнче те евĕклĕн ачашланĕ. Хуçи ун — çамрăках мар арçын — хăрах аллине кĕреçе, теприне хунав йывăç тытнă. Вăл Бианкăна ăшшăн, кăмăллăн кулкаласа темскер калать. Çак калаçăва йывăçсем те итленĕн, таравatлансах хутшăннăн туйăнать. Туратсен сыпăнăвĕнче, тăрă сывлăш чӳхенĕвĕнче, хĕрӳ хĕвелĕн йăлтăркка пайăркисенче вара — этемпе чĕрчунăн тата йывăç-курăкăн сĕмавалтан килекен туслă çыхăнăвĕ, çутçанталăкăн уйрăлми пĕрпĕтĕмлĕхĕ, нихçан-нихçан иксĕлми хăватлă вăйĕпе çутă илемĕ...

Картина ятне вулатăп: «Виççĕн».

*1978 ç.*